им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июнь
30
ЫТЛАРИКУН
№ 126 (9035)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

СССР Финанс министерстви пĕлтерни (1 стр.).
А. Зверев.—Çĕнĕ заем сарнин итогĕсем çинчен (1 стр.).
Тăван çĕршывра (1 стр.).
Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ (1 стр.).
Г. Шабаев. — КПСС Уставĕ—парти пурнăçĕн тĕп законĕ (2—3 стр.).
Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче. Районсем тата çул-йĕр участокĕсем çул-йĕр строительствинче ăмăртса ĕçлени çинчен (2 стр.).
И. Мешков.—Çул çинчи маттурсем (2 стр.).
П. Щипцов. — Институтри наукăлла конференци (2 стр.).
Бригада тырпул пухса кĕртме хатĕр (2 стр.).
РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУ: А. Андреев.—Пулнă йăнăшсене тÿрлетмелле (3 стр.).
Японире мир уйăхлăхĕ иртерессĕ (4 стр.).
Демократиллĕ Германи Республикин правительстви туса иртерекен ĕçсем (4 стр.).
Хĕвеланăç Германири нимĕç патриочĕсем фашистла провокаторсене ылханаççĕ (4 стр.).
Францири çĕнĕ правительство (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).

СССР Финанс министерстви пĕлтерни

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государственнăй заема (1953 çулхи кăларăм) 15 миллиард тенкĕлĕх кăларнă, ăна июнĕн 27-мĕшĕ кунĕ иртнĕ тĕле 15 миллиард та 343 миллион тенкĕлĕх сарнă.

СССР Финанс министерстви, СССР Министрĕсен Совечĕ кăтартса панă тăрăх, 1953 çулхи июнĕн 28-мĕшĕнчен заем çырăнса илессине пур çĕрте те чарса лартма хушнă.

СССР Финанс министрĕ А. ЗВЕРЕВ.

ПАРТИ ГРУППИ

Коммунизм строительствин питех те пысăк задачисем парти организацийĕсене партилле-политикăлла, партилле-организацилле ĕçсене вăйлатма, коммунистсемпе партире тăманнисен политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне ÿстерсе пыма хушаççĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕ социализмла ялхуçалăх умне кăларса тăратнă задачăсене чыслăн пурнăçлас тесен, ялсенчи парторганизацисен колхозсене тата машина-трактор станцийĕсене ертсе пырас ĕçе çÿлĕ пусăма çĕклес пулать. Парторганизацисем обществăлла хуçалăха аталантарса тĕреклетессишĕн, техникăпа туллин усă курмалла тăвассишĕн, колхозниксен пурнăçĕпе культурине малалла лайăхлатассишĕн кĕрешме тивĕç.

Парти райкомĕсен колхозсенчи пуçламăш парторганизацин ĕçри пултарулăхне пур майсемпе те вăйлатса пырас пулать. Çакă вăл коммунистсемпе партире тăманнисем хушшинчи çыхăнăва лайăхлатса, тĕреклетсе пынинчен, ялхуçалăх ĕçченĕсене парти кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешĕве хутшăнтарнинчен килет.

Ку тĕлĕшпе парти групписен пĕлтерĕшĕ пысăк. Вĕсене тăвасси çинчен партин XIX-мĕш съезчĕ çирĕплетнĕ Уставра тĕплĕн кăтартса панă. «Цехсенчи, участоксенчи тата ытти организацисенче, çавăн пекех тата членсемпе кандидатсем 100 çынтан сахалтарах шутланакан пуçламăш парторганизацисенче предприяти бригадисем, агрегачĕсем тăрăх парти групписем тума пултараççĕ». Вĕсен тĕп задачи ĕççыннисем хушшинчи массăлла-политикăлла ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе пуçламăш парторганизацисене пулăшасси, производствăра коммунистсен авангардла рольне ÿстересси, хуçалăх ĕçĕсем мĕнле пынине тĕрĕслесе тăрасси пулать.

Парти группи, коммунистсемпе тата партире тăманнисемпе чи çывăх пулнă май, кашнин лайăх пахалăхĕсемпе çитменлĕхĕсене тĕплĕнрех пĕлсе тăма пултарать. Ăнлантарса ĕнентермелли меслетпе усă курса, ĕççыннисене воспитани парса пырса, парти группи рабочисемпе колхозниксен ăнланулăхне ÿстерсе пыма, вĕсем ĕç дисциплинине çирĕп тытса пыччăр тата обществăлла хуçалăха типтерлĕ сыхласа ÿстерсе пыччăр тесе тăрăшма тивĕç.

Колхозсене пĕрлештерни вĕсенчи пуçламăш парторганизацисен пĕлтерĕшне ÿстерме май пачĕ. Пĕрлештернĕ нумай колхозсене халĕ темиçе ял кĕрет тата вĕсем пĕр-пĕринчен аякра лараççĕ. Çавăнпа та колхоз ĕçĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе бригадăсенчи партгруппăсем парторганизацисен чăн-чăн помощникĕсем пулмалла.

Уй-хир бригадисенчи тата выльăх-чĕрлĕх фермисенчи парти групписенчен чылайăшне нумаях пулмасть тунă пулин те, вĕсем хăйсен ĕçĕнче чылай паха опыт пухрĕç. Вĕсем ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăсене пурнăçлас ĕçе мĕнпур колхозниксене мобилизацилес тĕлĕшпе парторганизацисене пысăк пулăшу параççĕ.

Акă, сăмахран, Чкаловски районĕнчи «Восток» колхозри выльăх-чĕрлĕх ферминчи парти группине илер. Вăл тăватă çынтан тăрать. Парти группинчи коммунистсем хăйсене шанса панă ĕçсене тÿрĕ кăмăлпа, тăрăшса туса пыраççĕ. Вĕсен пурин те парти поручениĕсем пур. Коммунистсем фермăра ĕçлекенсем хушшинчи политикăлла воспитани ĕçне туса пыраççĕ, калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Парти группинче пухусем вăхăтра пулса иртеççĕ, унта ферма ĕçĕнчи тĕп ыйтусене тата выльăх-чĕрлĕх тупăшлăхне ÿстересси çинчен сÿтсе яваççĕ. Партгруппа фермăра социализмла ăмăрту анлăн сарса янă, çавна май ферма халĕ районта малти вырăнсенчен пĕрне йышăннă.

Çапах та, калас пулать, хăшпĕр парторганизацисем партгруппăсен пĕлтерĕшне тивĕçлипе хакламаççĕ-ха. Çавна пула чылай партгруппăсем колхозсемпе МТС-сенчи пуçламăш парторганизацисене умра тăракан задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ, социализмла ăмăртăва кирлĕ пек сарса пымаççĕ, колхозниксемпе МТС работникĕсем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе йĕркелемеççĕ. Нумай çĕрте партгруппăсем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ, коммунистсен пухăвĕсене иртермеççĕ, парти членĕсемпе кандидачĕсене порученисем памаççĕ.

Парти групписем ăнăçлă ĕçлесси вĕсене парти райкомĕсем куллен ертсе пынинчен нумай килет. Çапах та çакна палăртмалла: уй-хир, трактор бригадисенчи тата выльăх-чĕрлĕх фермисенчи партгруппăсене партин чылай райкомĕсем çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсене çирĕплетес тата куллен пулăшу парас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмаççĕ.

Сĕнтĕр районĕнче, сăмахран, иртнĕ çулхине парти групписене 12 тунă пулнă. Вĕсенчен халĕ тăваттăшĕ кăна ĕçлеççĕ, ыттисем вара саланса кайнă. Çакă вăл парти райкомĕпе пуçламăш парторганизацисем партгруппăсене организацисенчен çирĕплетме тăрăшманнинчен килнĕ.

Чылай районсенче, парти групписем тума май пур çĕртех, вĕсене тумаççĕ.

Парти групписене организацилесси, вĕсен ĕçне куллен ертсе пырасси пуçламăш организацисен тивĕçĕ пулать. Вĕсен коммунистсене колхоз производствин чи кирлĕ участокĕсем тăрăх вырнаçтарса тухмалла, уй-хир, трактор бригадисене тата выльăх-чĕрлĕх фермисене ĕçе пĕлекен кадрсемпе çирĕплетме тăрăшмалла.

Парти группи пуçламăш парторганизаци пайĕ пулать. Апла пулсан, унăн хăйĕн ĕçĕсене парторганизаци умĕнче тăракан задачăсемпе тачă çыхăнтарса туса пымалла. Парти райкомĕсен, пуçламăш парторганизацисен секретарĕсене партгруппăсене куллен ертсе пыма пулăшнипе пĕрлех, хăйсен те партгруппоргсене куллен воспитани памалла, партилле ĕç меслечĕсене вĕрентмелле, коммунистсен активлăхне ÿстерсе пыма хăнăхтармалла.

Парти группин пысăк тивĕçĕ вăл — коммунистсен ĕçри активлăхне ÿстересси. Çакă вăл, пуринчен ытла, коммунистсене ĕç ăнăçлăхне татса паракан участоксем тăрăх вырнаçтарса тухнинчен килет. Халĕ, тырпул пухса кĕртме тата государствăна тырă пама хатĕрленнĕ вăхăтра, коммунистсене ĕçе вырнаçтарасси уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Колхозри кашни коммунистăн ответлă ĕç пултăр, вăл хăйне хушнă тивĕçе чыслăн пурнăçласа пытăр, мĕнпур колхозниксене хастарлă кĕрешĕве мобилизацилесе пытăр.

Парти группи хуçалăхăн чи паллă участокĕсенче—уй-хир, трактор бригадисенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче—ĕçлекен коммунистсене пĕрлештерсе тăрать, вĕсене ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна пурнăçлассишĕн кĕрешме мобилизацилет. Парти групписене куллен ертсе, пулăшса пырасси, вĕсем массăсене чăннипех ертсе пыраканĕсем пулччăр тесе тăрăшасси — парторганизацисен тивĕçĕ.

„Декабристсем" опера Пысăк театрта

Июнĕн 27-мĕшĕнче, шăматкун, ССР Союзĕн Пысăк театрĕнче Ю. Шапорин çырнă «Декабристсем» ятлă çĕнĕ оперăн иккĕмĕш спектаклĕ пулнă (либретто авторĕ В. Рождественский).

Дирижерĕ А. Мелик-Пашаев пулнă. Спектакле Н. Охлопков лартнă. Декорацие А. Петрицкий тата Т. Старженецкая художниксем хатĕрленĕ. Ташăсене Л. Лавровский йĕркеленĕ. Хормейстер М. Шорин.

Тĕп рольсенче çаксем вылянă: А. Иванов (Рылеев), А. Кривченя (Пестель), Г. Нэлепп (Каховский), И. Петров (Бестужев), П. Селиванов (Трубецкой), В. Ивановский (Щепин-Ростовский), Н. Покровская (Елена), А. Огнивцев (I-мĕш Николай), П. Воловов (Якубович), П. Чекин (Ростовцев), Н. Щегольков (ватă салтак), Е. Вербицкая (Щепин-Ростовский амăшĕ), В. Борисенко (Стеша цыганка) тата ыттисем те.

Оперăра 1825 çулта Петербургра Сенат площадĕнче декабристсем тунă восстанипе çыхăнса тăракан ĕçсене кăтартнă.

Спектакль питĕ ăнăçлă иртнĕ. Куракансем уйрăмах декабристсем Рылеев патĕнче канашлу иртернине, сенат площадĕнче пулнă восстание, Рылеевпа Пестель Петропавловски крепоçра тĕл пулнине тата опера финалне хапăл туса йышăннă.

Спектакльре партипе правительство руководителĕсем: Г. М. Маленков, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, Н. С. Хрущев, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, Н. М. Шверник, П. К. Пономаренко, В. А. Малышев юлташсем пулнă.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

★

Юрă уявĕсем

АРХАНГЕЛЬСК. «Динамо» стадионне хулари 10 пин çын ытла пухăннă. Кунта йăлана кĕнĕ юрă уявĕ пулса иртнĕ. Уяв виçĕ пин çурă çынтан тăракан хор туха юрланипе уçăлнă.

Çурçĕр тинĕс пароходствин, «Северолес» трестĕн, учительсен çурчĕн хор коллективĕсем тата ыттисем те вырăс халăхĕн юррисене, совет композиторĕсем çырнă юрăсене, халăх демократи çĕршывĕсенчи юрăсене юрласа панă. Ташă ушкăнĕсем те лайăх ташласа кăтартнă.

СЫКТЫВКАР. Киров ячĕпе тăракан культурăпа кану паркне июнĕн 28-мĕшĕнче юрă уявĕ иртерме пиншер çын пухăннă.

Уяв Коми АССР-ĕнчи художествăллă пултарулăх коллективĕсен 2 пин çынран тăракан хорĕ Совет Союзĕн Гимнне юрласа панипе пуçланнă. Хор «Парти—пирĕн рулевой» ятлă юрра хаваслăн юрланă.

Хор коллективĕсемпе ташă ушкăнĕсем туха хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ. Юрăсене вырăсла, коми, украина чĕлхипе юрласа панă

Уяв хыççăн ĕççыннисем вăхăта савăнăçлăн иртернĕ.

МОЛОТОВ. Кунта юрă уявĕ пулса иртнĕ. Хулари клубсем çумĕнчи художествăллă пултарулăх кружокĕсен ĕçĕсене хутшăннă 7 пине яхăн çын Совет Союзĕн Гимнне, «Атăлран Дона çитиччен», «Уралти çамрăксен юрри» тата ытти юрăсене юрласа панă. «Пермь кадрилĕ» текен ташă пынă вăхăтра куракансем пĕтĕм чĕререн хавасланса алă çупнă.

Юрă уявĕ хыççăн ĕççыннисем Горький ячĕпе тăракан культурăпа кану паркĕнче савăннă. (ТАСС).

Планран иртерсе—çĕр кăмрăкĕ

КАРАГАНДА, июнĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Карагандауглеразрезы» трест çĕр кăмрăкĕ кăлармалли çур çулхи плана тултарнă.

Çĕр кăмрăкĕ кăларакан пур вырăнсенче те талăкри плана иртерсе тултараççĕ. 1—2 номерлĕ разрезăн коллективĕ уйрăмах лайăх ĕçлет, вăл планран иртерсе вуншар пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

Пушкăрт нефтяникĕсем çур çулхи плана тултарнă

УФА, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Башнефть» пĕрлешĕвне кĕрекен промыслсем нефть кăлармалли çур çулталăк планне тултарчĕç.

Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал вăтам шутпа кашни талăкра 27 процент ытларах нефть кăларнă. Ĕçĕн хăйне ларакан хакне йÿнетнипе 5 уйăхра планран иртерсе 7.835 пин тенкĕ укçа перекетленĕ.

Мускав. Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕн çĕнĕ çÿлĕ çурчĕсем патĕнче М. В. Ломоносова хисеплесе памятник лартнă. Памятнике Н. Томский скульптор тунă.
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: М. В. Ломоносов памятникĕ.
Н. СИТНИКОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

А. С. Макаренкăна асăнса

Июнĕн 28-мĕшĕнче Мускавра чаплă писатель тата педагог А. С. Макаренко вилтăпри çинче памятник уçнă. Новодевичье масарне общественность представителĕсем, çĕршыври тĕрлĕ хуласенчен килсе çитнĕ писательсемпе педагогсем, унăн ученикĕсемпе воспитанникĕсем пухăннă.

Писатель вилтăпри умĕнчи митинга А. Софронов уçать.

РСФСР Сутĕç министрĕ И. А. Каиров хăйĕн сăмахĕнче А. С. Макаренкăн педагогикăлла идейисем коммунизм строителĕсен çамрăк ăрăвне воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнă.

Митингра çавăн пекех РСФСР-ти пуçламăш тата вăтам шкулсенче ĕçлекен работниксен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ И. И. Гривков, Днепр çинчи Крюковăри А. С. Макаренко ячĕпе тăракан мемориальнăй музей директорĕ А. К. Неополитанский, РСФСР Педагогика наукисен академийĕн президиумĕн, Украина общественноçĕн представителĕсем туха каланă.

Митинг хупăнать. Памятник çинчен пÿркенчĕке илеççĕ. Гранит плита çине писатель портретне касса ÿкернĕ. Ылтăн саспаллисемпе: Антон Семенович Макаренко—1888 çулхи март—1939 çулхи апрель, тесе çырса хунă.

Постамент умĕнче—уçнă кĕнеке тытса тăракан пионер сăнĕ.

А. С. Макаренко вилтăпри çине чечексем хунă. (ТАСС).

Кубаньре урпа вырас ĕç сарăлса пырать

КРАСНОДАР, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Кубаньре кĕрхи урпа пухса кĕртес ĕç сарăлса пырать. Тырă вырма Курган, Пластуновски, Усть-Лаба, Тимашевски районĕсем тата ыттисем те тытăннă. Урпана комбайнсемпе пухса кĕртеççĕ. Пур çĕрте те уйрăм ушкăнпа ĕçлес меслетпе усă кураççĕ.

Тимашевски районĕнчи Димитров ячĕпе тăракан колхозри пиллĕкмĕш уй-хир бригади питĕ лайăх урпа туса илнĕ. Кунта кашни гектартан 42 центнер урпа тухать.

Щербина комбайнер Абински районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз уй-хирĕсенче кашни гектар пуçне 35 центнер таран урпа пухса кĕртет.

Çитес кунсенче колхозсем кĕрхи тулă пухса кĕртме тытăнаççĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

КИЕВ, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Украинăра утă çуласси кунран-кун вăйланса пырать. Кăçал хальхи вăхăт тĕлне, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, пĕр хут çурă ытларах утă çулса пуçтарнă. Винница тата Измаил облаçĕсенче утă çулса пĕтернĕ.

Кăçал утă çулакан, утă капанĕ хывакан тата ытти машинăсем нумай кÿрсе килнĕ. Çавна пула МТС-сен механизаторĕсем кăçал иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах утă çулса пухнă. Малта пыракан механизаторсем мĕнпур ĕçе комплекслă йĕркепе туса пыраççĕ.

Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ

РИГА, июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Я. Э. Калнберзин юлташ политикăлла ĕçри тата республикăри хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсем çинчен тунă доклада итлесе сÿтсе явнă.

Пленум республикăри ертсе пыракан парти, совет, хуçалăх органĕсен ĕçĕнчи пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсене палăртнă, вĕсем хăйсен ĕçĕнче наци политикине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пысăк йăнăшсем тунă. Республикăра ертсе пыракан парти, совет, хуçалăх организацийĕсенче ĕçлеме латыш халăхĕ хушшинчен кадрсем суйласа илес, воспитани парас, ĕçе уйăрса лартас тĕлĕшпе ленинла-сталинла наци политикине пăснă. Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ партипе совет органĕсем, халăх хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе анлăн сарса ярас вырăнне, административла майсемпе ĕçленине тата совет законлăхне сĕмсĕррĕн пăснине сивленĕ. Пленум идеологи ĕçĕнчи, коммунистсене, ĕççыннисене анлă массăсене, латышсен интеллигенцине политикăлла воспитани парас ĕçри пысăк çитменлĕхсемшĕн хыттăн критикленĕ.

Пленумра çавăн пекех колхоз строительствине ертсе пырас ĕçри пысăк йăнăшсене палăртнă. Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Латви ССР Министрĕсен Совечĕ республикăри колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса иртермен.

Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ палăртнă йăнăшсемпе çитменлĕхсене татăклăн тÿрлетес, Латви ССР-ĕнче ленинла-сталинла наци политикине пурнăçа çирĕппĕн кĕртсе пырас, республикăри халăх хушшинче политикăлла ĕçе вăйлатас, ертсе пыракан парти, совет, хуçалăх органĕсенче ĕçлеме латыш халăхĕ хушшинчен кадрсене ĕçе уйăрса лартас тата вĕсене воспитани парассине лайăхлатас, колхозсене политика тата организаципе хуçалăх ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пырас енĕпе чылай ĕçсем туса иртерме палăртнă.

Пленум çавăн пекех организацилле ыйтусем пăхса тухнă. Латвири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн иккĕмĕш секретарĕ пулма В. Г. Круминьш юлташа суйланă, парти, профсоюз тата комсомол органĕсен пайĕн заведующийĕ пулма Н. Я. Биссенек юлташа, пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ пулма Я. Г. Авотиня юлташа, шкулсен пайĕн заведующийĕ пулма А. Я. Андриксон юлташа, административла ĕçсен тата сутуилупе финанс органĕсен пайĕн заведующийĕ пулма И. И. Десмитнек юлташа, наукăпа культура пайĕн заведующийĕ пулма А. Э. Босс юлташа, промышленноçпа транспорт пайĕн заведующийĕ пулма А. И. Миглиник юлташа суйланă.

ÇĔНĔ ЗАЕМ САРНИН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

А. ЗВЕРЕВ,
СССР Финанс министрĕ

Халăх хуçалăхне аталантармалли государство заемне 15 миллиард тенкĕлĕх кăларнă, ăна виçĕ кун хушшинче 15 миллиард та 343 миллион тенкĕлĕх сарнă.

Çĕнĕ заема пĕтĕм совет халăхĕ, пирĕн Тăван çĕршыври халăхăн мĕнпур сийĕсем чĕререн кăмăлласа йышăнчĕç. Заем çырăнса илесси рабочисем, хресченсем, совет интеллигенцийĕ хушшинче пысăк çĕкленÿпе пулса иртрĕ.

Çĕнĕ заем çинчен Верх-Исетскри тимĕр-тăмăр заводĕнче ĕçлекен ватă металлург Федор Ландин питĕ лайăх каланă: «Совет государстви мирлĕ строительствăн анлă программине пурнăçласа пырать. Хуласем ÿссе лайăхланаççĕ, фабрикăсемпе заводсем хамăр Тăван çĕршывра туса кăларнă чи лайăх техникăпа пуянланаççĕ. Çурт-йĕр тата культурăпа йăла строительстви анлăн сарăлса пырать. Мирлĕ строительство тĕллевĕсене пăхăнса тăрать те ĕнтĕ çĕнĕ заем. Акă мĕншĕн эпир хамăр ирĕкпе тата ырă кăмăлпа государствăна хамăр укçана кивçен паратпăр».

Колхоз хресченĕсем те заем кăларнине чĕререн ырласа йышăнчĕç. Ростов облаçĕнчи Веселовски районти Сталин ячĕпе тăракан колхозри пухура Захаров юлташ çапла каланă: «Пирĕн анлă уй-хирсенче вуншар тракторсем, комбайнсем тата ытти çĕнĕ машинăсем ĕçлеççĕ, вĕсем пирĕн ĕçе çăмăллатаççĕ. Эпир пирĕн заемсем мир ĕçне тĕреклетме кайнине пĕлетпĕр». Хресченсем хушшинче заем çырăнса илесси пысăк ăнăçлăхпа пулса иртрĕ. Кун çинчен сăмахран çакă та лайăх кăтартса парать: хресченсем çырăнса илнĕ заем укçине халех ĕнтĕ çурри ытла тÿлесе татнă.

Заем çырăнса илесси ученăйсем, государство служащийĕсем тата пĕтĕм совет интеллигенцийĕ хушшинче пысăк активлăхпа иртнĕ. Наука академийĕнче пулнă митингра паллă ученăйсем совет экономики вĕçĕмсĕр ÿссе пыни çинчен, пирĕн çĕршывра наука чечекленсе аталанни çинчен, государство заемĕсен халăх хуçалăхĕпе наукăна аталантарас ĕçри пĕлтерĕшĕ çинчен каланă.

Заем кăларнине пурте пĕр шухăшлă пулса ырласа йышăнни тата ăна ăнăçлăн вырнаçтарни тепĕр хут совет халăхĕн çирĕп пĕрлĕхĕ çинчен, вăл Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви туса иртерекен ĕçсене хĕрÿллĕн йышăнни çинчен калать.

Çакна ăна ăнланмалла та ĕнтĕ. Пирĕн совет заемĕсем мирлĕ хуçалăхпа культура строительствине каяççĕ. Вĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн пуянлăхне ÿстерме, халăхăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме пулăшаççĕ. Партипе Правительство çакăншăн куллен тăрăшаççĕ.

Заем укçипе çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем туса лартатпăр. Машина-трактор станцисем тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе пуянланаççĕ. Заем укçи наукăна, халăха вĕрентес ĕçе, сывлăха сыхлас ĕçе вăйлатма пулăшать.

Çав вăхăтрах пирĕн государство заемĕсем халăха тÿрех пысăк тупăш кÿреççĕ. 1952 тата 1953 çулсенче кăна заем тăрăх халăха 17 миллиард тенкĕ укçа тÿлеççĕ.

Совет правительстви социализмла хуçалăх пухакан укçа-тенкĕ пĕрмаях ÿссе пынине шута илсе, кăçал заем сарса халăх укçине бюджета хутшăнтарассине чылай чакарма йышăнчĕ. Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, çĕнĕ заема 1952 çулхипе танлаштарсан икĕ хут сахалрах кăларнă.

Социализмла хуçалăх пухакан укçа-тенкĕ ÿсни халăх хуçалăхне аталантармалли плансене ăнăçлăн тултарнинчен килнĕ, вăл пирĕн çĕршывăн экономики малалла хăвăтлăн вăйланассине пĕлтерет. Обществăлла производство аталанни наци тупăшне малалла ÿстерме май парать, çапла вара совет халăхĕн материальнăй пурнăçне тăтăш ÿстерсе, лайăхлатса пыма май парать.

Заема иртнĕ çулхипе танлаштарсан чылай сахалтарах кăларни тата ăна ăнăçлă вырнаçтарни, çакăнпа пĕрлех, совет укçи çирĕпленни çинчен, совет финансĕ тĕреклĕ пулни çинчен калать. Социализмла государствăн финансĕпе унăн укçа системи çирĕп пулмалли никĕс мирлĕ социализмла экономика пĕрмай ÿссе пыни, çĕршывăн наци тупăшĕ пĕрмай ÿссе пыни пулса тăрать. Çак тупăш пĕтĕмпех халăх ĕçне каять.

Совет укçин тавар илмелли вăйĕ кунтан-кун ÿссе пырать. Совет Союзĕн укçа системи тĕреклĕ, совет валюти хальхи вăхăтра нихçанхинчен ытларах çирĕп.

Çакна-май хăшпĕр çĕрте халăхăн пĕр пайĕ хушшинче юлашки вăхăтра сарăлнă сăмах—çĕнĕрен укçа-тенкĕ реформи пулмалла текен хыпар пĕтĕмпех тĕрĕс мар, вырăнсăр сăмах пулса тăрать. Çакăн пек хыпар сарăлма нимĕнле сăлтав та çук. Вăл—суя тата сиенлĕ хыпар. Паллă ĕнтĕ, укçа реформине экономика хавшаннă тата укçа йÿнелнĕ условисенче иртереççĕ.

Çавăн пекки пирĕн çĕршывра çук. Пачах урăхла, вăрçă хыççăнхи халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсем пĕрмай çĕкленсе пынипе, продукцин хăйне ларакан хакĕ чылай йÿнелнипе, çакăн тăрăх апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсене тăтăшах йÿнетсе пынипе совет укçи çултан-çул çирĕпленсе пырать, унăн тавар илмелли вăйĕ ÿссе пырать.

Çакна калаçан та çителĕклĕ: юлашки пилĕк çул хушшинче совет укçин тавар илмелли вăйĕ икĕ хут ытла ÿснĕ. Совет çыннисем çакна лайăх пĕлеççĕ—хальхи вăхăтра вĕсем пĕр сумма укçапах 1947 çул вĕçĕнче илме пултарнинчен икĕ хут ытларах тавар илме пултараççĕ.

Партипе Правительство совет гражданĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн ялан тăрăшаççĕ, вĕсен тупăшĕсем тата ĕç укçи çирĕп пулмалла тăваççĕ. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисен хăйсен укçи-тенки пирки пăшăрханма нимĕнле сăлтав та çук.

* * *

Заем çырăнса илес ĕçе политикăлла пысăк çĕкленÿпе, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче производствăлла пысăк çĕкленÿ пулнă условисенче иртерни çак заемран 1953 çулхи бюджета кĕртме палăртнă тупăш укçине пĕтĕмпех пухса çитерме май парать. Çакă вăл халăх хуçалăхĕн планне ăнăçлă тултарма пулăшать.

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

Районсем тата çул-йĕр участокĕсем çул-йĕр строительствинче ăмăртса ĕçлени çинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çакна палăртнă:

Хăшпĕр районсем çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарассишĕн кĕрешес ĕçе çителĕклĕ организацилемен, колхозниксене çул çинче ĕçлеме массăллăн хутшăнтарнă, плана уйрăм кăтартусем тăрăх тултармалла тунă. Сăмахран, Шупашкар районĕ июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне материалсем турттарса кăлармалли плана 112 процент, сĕр чавса купаламалли плана—100 процент, чул сарса сĕнĕ çул тумалли тата чул сарнă кивĕ çулсене юсамалли плана—73 процент, кĕперсемпе трубасем тумалли тата юсамалли плана—51 процент, ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана 69 процент тултарнă.

Тăвай районĕ материалсем турттарса кăлармалли плана 100 процент, сĕр чавса купаламалли плана—111 процент, чул сарса сĕнĕ çул тумалли тата чул сарнă кивĕ çулсене юсамалли плана—45 процент, кĕперсемпе трубасем тумалли плана 15 процент, ялти вăйпиттисене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана 65 процент тултарнă.

Чкаловски, Муркаш, Шăхасан тата Элĕк районĕсем чылай ĕç тунă. Республикăри нумай колхозсем 1953 çулхи çул-йĕр строительстви планне пур кăтартусем тăрăх та срокчен тултарнă.

Анчах июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕр район та Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулхи майăн 15-мĕшĕнче çирĕплетнĕ социализмла ăмăртăвăн условийĕсене, уйрăмах кĕперсем тăвас тĕлĕшпе, пурнăçламан. Нумай районсенче хăшпĕр колхозсем çул-йĕр строительствине хутшăнман, çул çинче ĕçлеме колхозниксем, лавсем, автомашинăсем куллен кăлармалли графика пурнăçламаççĕ.

Çул-йĕр строительстви енĕпе пыракан социализмла ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. Районсем социализмла ăмăртăвăн пур условийĕсене те пурнăçламан пирки Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне 1953 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлĕнчи ăмăрту итогĕсем тăрăх тин памалла тунă.

2. Райисполкомсен председателĕсене çулсемпе кĕперсем тумалли тата юсамалли плана пур колхозсем тăрăх та срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăрту анлăн сарма, çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тултарнă колхозсене Хисеп хăми çине кĕртме, лайăх ĕçлекен колхозниксене Хисеп грамотипе наградăлама сĕнĕвсем тăратма хушнă.

3. Райисполкомсене йывăç, чул, хăйăр, грави хатĕрлес тата турттарса кăларас ĕç çине уйрăмах тимлĕн пăхма хушнă, мĕншĕн тесен государство çул-йĕр строительстви енĕпе çирĕплетсе панă плана тултарасси çавăнтан нумай килет. Ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана пур ял Совечĕсем енĕпе те 1953 çулхи июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултарма хушнă.

Çул çинчи маттурсем

Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Хапхинчен кĕрес пулсан,
Чĕнтĕрленĕ, ярапаллă
Сĕнĕ çуртсене куран...

Янравлă юрă шăрантараççĕ çул çинче ĕçлекенсем.

— Мĕнле уяв кунта?—кабинăран тухсанах шӳт туса ыйтрĕ шофер.

— Çул çине пăхсан чун савăнать. Мĕн чухлĕ çын ĕçлет кунта!

— Ăçтан юрламасăр, савăнмасăр чăтăн,—терĕ çул çинче ĕçлекенсенчен пĕри.

— Ытла та илемлĕ юрлатăр,—сăмах хушрĕ çулпа иртсе пыракан çын çул çинче ĕçлекен хĕрачасене.

— Юрăпа ĕç çăмăлланать, ĕçленĕсем ĕçлес килет,—терĕ хĕрача.

Кунта Чкаловски районĕнчи «Пламя Октября» колхоз членĕсем ĕçлеççĕ. Пурĕ 92 çын. Пĕр ушкăнĕ сĕр чават, теприччанĕ сĕре 3—4 метр тăршшĕ йăтса купалать. Кивĕ çул çумне тепĕр çул, хĕлле машинăсем çӳремелли çул, тăваççĕ. Ĕç пĕр минутлăха та чарăнмасть, вăйланнăçем вăйланса пырать. Сĕр чавакансем носилка çине купаласса кĕтсе тăмаççĕ, пĕрисем носилкăна йăтса кайнă сĕре теприсем килсе тăраççĕ.

Колхозниксем хушшинче ăмăрту анлă сарăлнă. Ф. Матросов, И. Кулаков, В. Волкова, Д. Корсакова тата ыттисем те ĕç нормине кӳллен ирттерсе тултараççĕ.

— Паян пирĕн сĕр чавса купаламалли плана тултармалла. Енерхи хăвăртлăхпа ĕçлесен эсир каçчен тата 150 кубометр купалама пултаратăр,—тет колхоз председателĕ П. Немцев юлташ.

— Пирĕн ĕç чарăнмĕ,—ăшă кăмăлпа ответлеççĕ хĕрсем.—Тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларасси—пирĕн йăла мар.

Колхозăн плапа 800 кубометр сĕр чавса купаламалла пулнă. Колхозниксем çак плана тултарнă.

Хĕвел кăнтăрлана çитсен, çул çинче ĕçлекенсем канма ларчĕç. Кунта кăнтăрлахи апат вăхăчĕ нихçан та ахаль иртмест. Агитаторсем кашни кунах тĕнчери лару-тăру çинчен каласа параççĕ, хамăр сĕршывра пулса иртекен савăнмалли сĕнĕ хыпарсене пĕлтереççĕ.

Патăръелĕнчен автомашина çитрĕ. Машина çинче — районти культура çурчĕ йĕркеленĕ агиткультбригада. Колхозниксем валли час-часах концертсем параççĕ. Автомашина çитнĕ-çитменех ун патне халăх пухăнчĕ.

Концерт умĕн КПСС райкомĕн пропагандисчĕ А. Владимиров юлташ доклад туса пачĕ. Ун хыççăн агиткультбригада членĕсем юрларĕç, такмаксем каларĕç, ташларĕç.

Концерт вĕçленнĕ хыççăн çул çинче каллех хĕрӳллĕ ĕç пуçланчĕ.

Эпир «Кзыл Юлдуз» колхоз членĕсем ĕçлекен участока та çитсе куртăмăр. Асăннă колхоз членĕсем чул кăлармалли плана 101 процент пурнăçланă.

* * *

Патăръелпе Комсомольски хушшинчи çул çинче куллен сĕршер çын ытла ĕçлет. Вĕсем ĕçлекен çул тăрăх пĕр вĕçĕнчен пуçласа тепĕр вĕçне çитиччен икĕ сехете яхăн утмалла. Кивĕ çул çумне автомашинăсене хĕлле çӳреме сĕнĕ çул тăвакансем 10 километр тăршшĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсен пĕр ĕмĕт, пĕр тĕллев—çул-йĕр строительстви планне срокчен тултарасси, государствăна тырă пама пуçличчен автомашинăсене çӳреме лайăх çул туса парасси.

Колхозниксен сăмахĕ—çирĕп сăмах. Вĕсем ăмăртса ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Чкаловски районĕ июнĕн 25-мĕшĕ тĕлне сĕр чавса купаламалли плана 92 процент ытла, чул сарса çул тумалли плана 110 процент пурнăçланă. Чул, хăйăр, пĕрене турттарас ĕç те ăнăçлă пулса пырать.

Çул çинче социализмла ăмăрту куллен-кун вăйланать.

И. МЕШКОВ.

Институтри наукăлла конференци

Канашри учительски институтри профессорсемпе преподавательсем иртнĕ çулта çирĕм виçĕ ытла тăрăх наукăпа тĕпчев ĕçĕсем туса диссертацисемпе монографисем çырма пуçланă. Халĕ вĕсенчен саккăршне çырса хатĕрленĕ. Çак кунсенче çав ĕçсене институтри наукăлла конференцире пăхса тухрĕç.

Конференцире сӳтсе явнă ĕçсене истори, чĕлхе, педагогика, психологи, математика, ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх çырнă. Вĕсем пурте паянхи кунпа тачă çыхăнса тăракан, вăраха ямасăр татса памалли ыйтусем.

Институтăн аслă преподавателĕ Г. Шумилов юлташ «Чăваш республикинчи ĕççыннисем пĕррмĕш пилĕкçуллăхра ялхуçалăхне коллективизацилессишĕн кĕрешни» çинчен çырнă хăйĕн диссертацийĕпе паллаштарчĕ. Вăл çак ĕçре халиччен ниçта та пичетленмен материалсемпе усă курса, колхозсене пĕрлешиччен хресченсен тупăшĕ чакни, артельсем тусан кăна вĕсем ĕмĕрхи асаплăхран хăтăлма пултарни çинчен ĕненмелле кăтартса панă. Автор ялти класс кĕрешĕвне, колхозсем тунă хыççăн ялхуçалăхĕ хăвăртрах аталанма пуçланине кăтартнă.

Шумилов юлташăн диссертацийĕнче туса çитереймен вырăнсем те пур-ха. Уйрăммăнах вăл чухăнсемпе вăтам хресченсем партипе правительствăна колхозсем тума мĕнле пулăшса пынине, чăваш ялĕн условийĕнчи класс кĕрешĕвне, совхозсемпе МТС-сем колхозсене çĕрĕс культурине ӳстерме, организаципе хуçалăх енчен çирĕплетсе пыма пулăшнине çутатса парайман.

Биологи наукисен кандидачĕ М. Солоницына юлташ «Чăваш республикинчи çырмасемпе тата çырма таврашĕнчи çĕрпе усă курасси» çинчен çырнă монографипе паллаштарчĕ.

Солоницына юлташ монографийĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Вăл çырмасемпе усă курмалли майсене тупас тĕлĕшпе хăшпĕр сĕнавсем тума пуçланă. Анчах та вăл Чăваш республикинчи çырмасене лайăххах тĕпчесе пĕлейменнине тата республикăра çырмасемпе кĕрешес тĕлĕшпе ку таранччен туса ирттернĕ сĕнавлă ĕçсемпе паллашманнине палăртмасăр иртсе кайма çук. Ик-виçĕ колхозпа кăна çыхăнса ĕçлени те ăна сĕнавлă ĕçсене анлăн туса пыма чăрмантарнă.

Институтăн аслă преподавателĕ Н. Резюков юлташ «Чăваш чĕлхинчи хутлă предложенисем çинчен» çырнă монографипе паллаштарчĕ. Вăл чăваш чĕлхине нумай халăхсен чĕлхипе танлаштарнă, пур енчен те тĕпчесе пăхнă хыççăн чăваш чĕлхинче пăхăнуллă-хутлă предложенисем хăйне евĕрлĕ пулаççĕ, тесе вывод тăвать. Унăн ĕçĕ чăваш чĕлхин синтаксисне йĕркелесе çитерес ĕçре пысăк пулăшу пама пултарать.

Педагогика ыйтăвĕсемпе çырнă диссертацисемпе монографисенчен Кибякова, Виткович, Александрова юлташсен ĕçĕсене пысăк интереспа сӳтсе яврĕç.

А. Кибякова юлташ хăйĕн диссертацине чăвашсене вырăс сăмахне тĕрĕс калама чăрмантаракан сасăсене тĕпчени çинчен çырнă. Унăн ĕçĕ чăваш шкулĕсенчи ачасене вырăс сăмахĕсене тĕрĕс калама вĕрентме пулăшать. Ку, паллах, питĕ кирлĕ ĕç. Анчах та, Кибякова юлташ чăвашла пĕлмен пирки, хăйĕн диссертацийĕнче чăвашсем вырăс сăмахĕсене мĕнле каланине кăтартакан примерсем питĕ сахал илнĕ. Чăваш чĕлхинчи диалектсем вырăс сăмахĕсене тĕрĕс калама мĕнле чăрмантарнине те хисепе илсе çитереймен. Çавна пула вăл чăваш ачисене вырăс сăмахĕсене тĕрĕс калама вĕрентмелли майсене те кăтартса парайман.

Тухса калаçнă юлташсем Кибякова юлташа чăваш чĕлхине лайăх вĕренме сĕнчĕç тата вăл хăйĕн ĕçне пичетре пулнă материалсемпе кăна усă курса çырни çителĕксĕррине палла турĕç.

Педагогика наукисен кандидачĕ Н. Виткович юлташ «Географи карттине вулама вĕрентмелли методика» ятлă ĕçĕпе паллаштарчĕ. Ку вăл педагогика наукисен докторĕн степеньне илме çырнă диссертаци.

Виткович юлташ хăйĕн ăнланма çăмăл тата тĕплĕн çырнă ĕçĕнче ачасене географи карттине вулама вĕрентмелли нумай майсене кăтартса парать. Унăн ĕçĕн тĕп шухăшĕ—ачасене хăйсем тĕллĕн шухăшлама вĕрентесси. Вăл ачасене карттă çине пăхсан, учебник вуланă пекех, климата, çутçанталăкпа унăн пуянлăхне, тĕрлĕрен государствăсемпе вĕсен хушшинчи çыхăнусене ăнланса илекен тăвасшăн.

Конференци Витковичăн ĕçне ырланипе пĕрлех, ăна лайăхлатмалли майсене те кăтартрĕ. Уйрăммăнах масштабпа ĕçлемелли, карттăна вулама вĕрентес тĕлĕшпе киле задани парса ямалли, тĕрĕс ответлеймен ачасемпе ĕçлемелли методсене анлăлатма кирлине палăртрĕç. Кунсăр пуçне материалсене кашни класс валли уйрăм пай тусан аванрах пулассине те астутарчĕç.

Аслă преподаватель Т. Александрова юлташ вăтам шкулта физика урокĕсенче наглядлăй пособисемпе тата приборсемпе усă курассине лайăхлатас тĕлĕшпе хăй тунă ĕçсем çинчен каласа пачĕ.

Ку таранччен, кирлĕ приборсем çук пирки, физика вĕреннĕ чухне чылай темăсемпе класра опыт тума май килмен. Приборсем пулсан та, юлашки вăхăтра сĕнĕ шкулсем нумай усăлнă пирки, вĕсене кирлĕ таран туянаймаççĕ. Александрова юлташ физика вĕреннĕ чухне опытсем тума вăтăр ытла прибор шухăшласа кăларнă тата ку таранччен усă курнисене те лайăхлатнă. Унăн приборĕсем питĕ йӳнĕ тăраççĕ тата вĕсене физика вĕрентекен учительсем хăйсем е физика кружокĕнче тăракан ачасем туса хатĕрлеме пултараççĕ.

Конференци Александрова юлташăн ĕçне пысăка хурса хакларĕ тата унпа физика вĕрентекен учительсене анлăн паллаштармаллине палăртрĕ.

Пирĕн шутпа Çутĕç министерствин Александрова юлташăн приборĕсене мĕнле тумаллине ăнлантарса паракан брошюра кăларсан аван пулмалла.

Конференци ытти юлташсен ĕçĕсене те тĕплĕн тишкĕрсе тухса, усăллă сĕнӳсем пачĕ.

Канашри учительски институт ĕçлеме пуçлани нумай пулмасть-ха. Апла пулсан та кунти профессорсемпе преподавательсен коллективĕ совет наукине аталантарас тĕлĕшпе чылай ĕç туни пурне те савăнтарать.

Наукăпа тĕпчев ĕçĕсене туни преподавательсене хăйсене те чылай ӳсме пулăшнă. Çавна май студентсене пĕлӳ парасси те аванланнă.

Учительсен институчĕ кун пек конференци пĕррмĕш хут ирттерет-ха. Çавăнпа конференцие ирттерес ĕçре хăшпĕр кăлтăксем те пулчĕç. Сăмахран, конференцире пăхса тухма палăртнă ыйтусене малтан кафедрăсенче пăхса тухман. Кафедрăсенче пăхса тухнă пулсан чылай юлташсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене конференциччен тӳрлетме май пулнă. Ку ĕнтĕ институтри кафедрăсем наукăпа тĕпчев ĕçĕн центрĕ пулса тăманнине кăтартать.

Хăшпĕр юлташсем хăйсен диссертацийĕсемпе монографийĕсене çырнă чухне Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» произведенине тата съезд решенийĕсене тĕп вырăна хурса ĕçлемени сисĕнет.

Конференци вăхăтĕнче секцисем ĕçлемерĕç. Çавна пула пур ыйтусене те конференци ларăвĕнче сӳтсе яврĕç. Çавăн пекех, конференци ĕçне учительсемпе ытти специалистсене хутшăнтарман.

Институт конференцире пăхса тухнă чи лайăх ĕçсене суйласа илсе «ученые записки» кăларма шутлать.

П. ЩИПЦОВ,
(«Коммунизм ялавĕ» корреспонденчĕ).

Бригада тырпул пухса кĕртме хатĕр

(Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозри 1-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ А. Д. Ашанин каласа пани)

Тырпул пухса кĕртесси—чи хĕрӳллĕ те ответлă, савăнăçлă вăхăт. Тырпул пухса кĕртсе эпир хамăрăн хастарлă ĕçĕн чаплă итогĕсене куратпăр. Уй-хирте никçанхинчен ытла вăйлă тырпул çитĕнни колхозниксен савăнăçне тата та ытларах ӳстерет. Тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртсен эпир хамăрăн обязательствăсене тултаратпăр кăна мар, ирттерсе те тултаратпăр.

«Тырпул пухса кĕртесси—вăхăтра тумалли ĕç,—тенĕ И. В. Сталин,—вăл тăхтаса тăма юратмасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн—тырăллă пултăн, кая юлтăн—сухатрăн». Çак сăмахсене эпир ялан асра тытатпăр.

Пирĕн бригадăра пурĕ пилĕк жнейка, вĕсене лайăх юсаса хунă. Жнейкăсемпе паян тесен паян хире тухма пултаратпăр.

Колхозри столярсем кашни жатка пуçне пĕрер комплект запаслă пайсем туса хатĕрлерĕç. Çавăн пекех жаткăсен запаслă çĕççисем тата вĕсене хирте хăйрамалли хатĕрсем пур.

Алăпа ĕçлемелли инвентарь те хатĕр. Çурласене шăллатса хунă, вĕренсем, сенĕксем, кĕреçесем, шăпăрсем тата ытти хатĕрсем те çителĕклĕ. Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планне бригадăри колхозниксен пухăвĕнче пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Пирĕн 250 гектар ытла пĕрчĕллĕ тырăсем пухса кĕртмелле. Тырăн пысăк пайне самоходнăй комбайнсем выраççĕ. Анчах тырпула чи кĕске срокра пухса кĕртес тĕллевпе мĕнпур жнейкăсемпе, çавăн пекех çурласемпе те усă куратпăр. Çак ĕçе 90 çынтан кая мар тухмалла.

Алăпа тырă выракансем сдельщина йĕркипе ĕçлемелле. Нормăна ирттерсе тултарсан, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ. Опыт çакна кăтартса пачĕ: тырă выракан кашни колхозницăна уйрăм участок уйăрса пани ĕç ăнăçлăхне ӳстерет, кашниех хăйĕн участокне хăвăртрах вырса пĕтерессишĕн тăрăшать. Амăшĕ хăйсене уйăрса панă участоксем çине хăйĕн ӳссех çитĕнеймен ачисене илсе тухать, çавăн пекех ватă çынсем, пушă вăхăтра çемьери ытти çынсем—чугун çул çинче тата ялта ĕçлекен служащисем те вырма пулăшаççĕ.

Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекенсем çителĕклĕ пулччăр тесе, эпир утă çулса пухас ĕçе тырпул пухса кĕртиччен туса ирттеретпĕр. Çапла тума пирĕн кирлĕ условисем пурте пур. Утă çулса пухакан машинăсем (тăватă косилка, лашапа ĕçлемелли виçĕ кĕрепле) тата алăпа ĕçлемелли инвентарь юсавлă.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра машинăсене туллин ĕçлеттересси çине уйрăмах тимлĕн пăхатпăр. Жнейкăсен машинисчĕсем пулма çак ĕçре пысăк опыт пухнă колхозниксене—А. Ситухин коммуниста, Социализмла Ĕç Геройне Н. Суров комсомольца, Н. Жарков юлташа тата ыттисене те çирĕплетнĕ. Жнейкăна кӳлмелли лашасене сменăпа ĕçлеттеретпĕр. Машинистсем те сменăпа ĕçлемелле. Пирĕн пĕр жнейка та пушă лармалла пулмасть.

Колхозниксене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухасси çине эпир тимлĕ пăхатпăр, мĕншĕн тесен ĕçĕн ăнăçлăхне тĕпрен илсен çынсем татса параççĕ. Сăмахран, капан тăвакансене суйласа иличчен эпир сахал мар шухăшларăмăр. Урăхла пулма та пултараймасть: лайăх капан тусан тырă лайăх сыхланать, капана начар тусан çапма ĕлкĕреймен тырă йĕпенсе пăсăлма пултарать.

Колхоз государство умĕнчи малтанхи тивĕçе—тырă парас ĕçе вăхăтра тата пĕр чăрмавсăр туса пыма пултартăр тесе, эпир вырма тухнă хыççăн 3—4 кунтанах авăн çапма тытăнатпăр. Иртнĕ çулта авăн çапнă çĕрте сехет графикĕ тăрăх ĕçлени питĕ лайăх результатсем пачĕ. «МК-1100» молотилка плана пăхнинчен икĕ хут ытларах авăн çапрĕ. Çавăнпа эпир авăн çапнă çĕрте пĕррмĕш кунтан пуçласах сехет графикĕпе ĕçлеме тытăнатпăр.

Пирĕн бригада пиçсе çитнĕ участоксенчи тырра суйласа вырма пуçлать, пĕтĕм хирти тырпул пиçсе çитессине кĕтсе тăмасть. Чи лайăх участоксене, унти тырă вырăтман пулсан, комбайнсем валли хăваратпăр. Ĕç кунне тул сутăлнă-сутăлман пуçлатпăр, тĕттĕм пулсан кăна ĕçлеме чарăнатпăр. Кĕрхи тата çурхи пучахлă культурăсене эпир 12—14 кун хушшинче пухса кĕртетпĕр.

Тырпула чи кĕске срокра пухса кĕртни тăккаланчăксенчен сыхланма пулăшать. Эпир тăккаланчăксемпе кĕрешме çак ĕçсене туса ирттеретпĕр: тырпула аялтан кĕске касса выратпăр, хăмăл тăршшĕ 8—10 сантиметртан ытла юлмасть. Капансем тунă чухне кĕлтесене йăтса куçаратпăр, хăмăл тăрăх сĕтĕрсе пымастпăр. Грузовой автомашинăсем çинчи пур çурăксене те тĕплĕ питĕретпĕр, кĕлте турттарнă чухне урапасен тĕпне шăналăксем саратпăр. Авăн валли итемсене хытарса тăватпăр, пучахсем пухассине организацилетпĕр.

Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçĕн ăнăçлăхĕ колхозниксем хушшинче политмассăлла ĕçе лайăх йĕркеленинчен те нумай килет. Колхозри парти организаци пирĕн бригадăра çумне 6 агитатор тата хаçатсем вуласа паракансем 5 çын çирĕплетнĕ. Каннă чухнехи кашни минутпа усă курса, агитаторсем колхозниксене тырпула вăхăтра пухса кĕртесси, государствăна срокчен тырă парса татасси çинчен астутарсах тăраççĕ, çĕршыври тата урăх çĕршывсенчи паллă хыпарсем çинчен каласусем ирттереççĕ. Бригада членĕсем хушшинче социализмла ăмăртăва та анлă сарса яратпăр.

Тырпул пухса кĕртесси пирĕн бригадăшăн пысăк экзамен пулса тăрать. Анчах эпир тырпул пухса кĕртме лайăх хатĕрленнĕ, хамăр умра тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлăпăр, тесе шанса тăратпăр.

Паха сĕнӳсене шута илмелле

Сĕнтĕр районĕнчи «Ĕç ялавĕ» хаçат кăçалхи майăн 5-мĕшĕнче пĕр корреспондент çыравне пичетлесе кăларчĕ. Автор вăйлă тырпул мастерĕсем çинчен ытларах çырма, калавсем, сăвăсем, очерксем, фельетонсем тăтăшах пичетлеме сĕнчĕ. Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ, анчах çавнашкал материалсене хаçат пурпĕрех пичетлемест.

Хаçатăн 45-мĕш номерĕнче «Самокритикăпа аялтан килекен критикăна вăйлатса пымалла» ятлă умстатья пичетленĕ. Анчах ку ĕç районта мĕнле тăни çинчен хаçат пачах шарламасть. Юлашки вăхăтра хаçат критикăлла материалсем пачах çителĕксĕр пичетлет.

Хăшпĕр чухне пĕр ĕç çинченех икĕ хут çырать. Сĕнтĕрти пир-авăр фабрикинчи хор кружокĕ Шашкар ял Советĕнчи колхозсенче концерт пани çинчен 42-мĕшпе 43-мĕш номерсенче умлă-хыçлăнах çырса кăларни — усăсăр япала.

Хаçатăн хăйĕн корреспонденчĕсемпе вулаканĕсен паха сĕнĕвĕсене шута илмелле.

М. ИСАЕВ.

КПСС Уставĕ—парти пурнăçĕн тĕп законĕ

Пирĕн парти вăйĕ—унăн программăлла, тактикăлла тата организацилле принципĕсем пĕрлĕхлĕ пулнинче. Парти хăйĕн революцилле политикине массăсемпе çирĕп çыхăну тытассине тĕреклетнипе тата анлăлатса пынипе, хăйĕн хурçă пек çирĕп, централизованнăй организацийĕпе, организацилле ĕçе лайăх туса пынипе пурнăçлать.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ организацилле ĕçсенче те, идейăлла-теорилле ыйтусенче те творчествăлла марксизма тĕп вырăна хурать. Пирĕн парти ленинла-сталинла организацилле принципсене тĕп вырăна хурать, вĕсене ывăнма пĕлмесĕр лайăхлатса пырать, çакă вăра парти ĕçĕн конкретлă условийĕсене тивĕçтерет тата парти умĕнчи политикăлла сĕнĕ задачăсене пурнăçлама май парать. Парти организацилле ĕçе политикăлла задачăсен çӳлĕшне çĕклеме тăрăшать.

Коммунизм строительствин питех те пысăк задачисем партин ертсе пыракан рольне малалла вăйлатма, унăн речĕсене çирĕплетсе пĕтĕçтерме, ĕççыннисем хушшинчи организацилле ĕçсемпе воспитани ĕçĕсене лайăхлатма хушаççĕ. Коммунистсен партийĕ халĕ тĕп задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешет. Ку задачăсем: социализмран майĕпен коммунизма куçса пырса, коммунизмла общество тăвасси, обществăн пурлăхпа культура шайне пĕрмаях хăпартса пырасси, общество членĕсене интернационализм шухăшĕ майлă тата мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисемпе тăванла çыхăнусем тытса пырас шухăш майлă вĕрентсе воспитани парасси, тăшмансен агрессиллĕ ĕçĕсенчен сыхланма Советлă Тăван çĕршывăн активлă оборонине пур майсемпе те тĕреклетсе пырасси пулаççĕ.

Партин тĕп задачисемпе тачă çыхăнтарса, партин XIX-мĕш съездĕнче йышăннă Уставра парти членĕсен обязанноçĕсемпе прависене, партин аслă органĕсен тытăмне кăтартса панă, унăн вырăнти органĕсемпе пуçламăш организацийĕсен задачисене туллин кăтартса панă. Уставра коммунизм строительствин хальхи тапхăрĕнче партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçсен пĕлтерĕшĕ ӳсни палăрса тăрать. Устав парти строительствин питех те пысăк опытне пĕтĕçтерет.

Пĕр шухăшлă çынсен-коммунистсен хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ боевой союзĕ

КПСС Уставĕнче пирĕн парти çинчен кĕскен, наука енчен туллин кăтартса панă. Унта çапла каланă: Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пĕр шухăшлă çынсен-коммунистсен хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ боевой союзĕ пулса тăрать, вăл рабочи класăн, ĕç хресченĕсен тата ĕç интеллигенцин çыннисенчен организациленĕ.

Коммунистсен партийĕ хăйĕн идейăлла пĕрлĕхĕпе вăйлă. Вăл пĕр шухăшлă çынсен хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ боевой союзĕ пулни çакăнтан килет: партин идейăлла пĕрлĕхлĕ никĕс пур — марксизм-ленинизм — çутçанталăкпа общество аталанăвĕн законĕсем çинчен вĕрентекен наука, пусмăрпа эксплуатацире пурăнакан массăсен революцийĕ çинчен вĕрентекен наука, мĕнпур çĕршывсенче социализм çĕнтересси çинчен вĕрентекен наука, коммунизм обществи тăвасси çинчен вĕрентекен наука пур.

Революциллĕ марксистла партин членĕ кам пулма пултарни çинчен Ленин кăтартса панă формулировкăна, парти строительствин нумай çулсем хушшинчи историйĕнче тĕрĕсленĕ формулировкăна, сĕнĕ условисенче малалла аталантарнă.

«Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн членĕ пулма,—тенĕ Уставра,—кирек хăш ĕççынни те — Совет Союзĕн çын ĕçне эксплуатацилемен гражданинĕ, парти программипе Уставне йышăнакан, вĕсене пурнăçлама активлă пулăшакан, парти организацийĕсенчен пĕринче ĕçлекен тата партин пур решенийĕсене те пурнăçа кĕртсе пыракан кирек хăш ĕççынни те пултарать».

Парти программипе Уставне йышăнни, вĕсене пурнăçлама активлă пулăшни, парти организацийĕсенчен пĕринче ĕçлени тата партин пур решенийĕсене те пурнăçлани парти членĕ пулмалли тĕп услови пулса тăни çинчен каласа, Устав парти ирĕкĕпе ĕçĕсен пĕрлĕхне тĕреклетет, парти членĕ парти ĕçĕшĕн ответлă пулнине вăйлатать.

Парти пĕрлĕхĕ, унăн организацилле хăвачĕ Устава — парти пурнăçĕн тĕп законне — çирĕппĕн пурнăçласа пынинчен килет. Коммунистсен партийĕн организацилле принципĕсене тӳррĕн пурнăçласа пырассишĕн, унăн речĕсен пĕрлĕхĕшĕн, тасалăхĕшĕн тата çирĕплĕхĕшĕн кĕрешесси яланах партин тĕп задачи пулнă тата халĕ те çавăн пекех. Пирĕн парти историйĕ «экономистсене», меньшевиксене, троцкистсене, бухаринецсене, национал-уклонистсене тата рабочи класăн ытти тăшманĕсене хирĕç кĕрешнин тата вĕсене çапса аркатнин историйĕ пулать. Ленинизм тăшманĕсем партие шалтан аркатса тăкма, унăн хăвачĕн никĕсне хавшатма хăтланнă.

Парти речĕсен пĕрлĕхĕ Коммунистсен партийĕн хăвачĕпе никама çĕнтерейменлĕхĕн никĕсĕ пулнă тата халĕ çавăн пекех. Çавăнпа та Уставра партин кашни членĕ «парти вăйĕпе хăвачĕн тĕп условийĕ пулса тăракан парти пĕрлĕхне пур майсемпе те сыхламалла», тесе уйрăмах хытă палăртнă.

Пирĕн çĕршывра эксплуататорла классене пĕтерсе тăкнă хыççăн совет обществин моралльĕ-политикăлла пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ, парти ăшĕнче оппортунистла ушкăнсемпе фракцисем пулма социальнăй никĕс пĕтрĕ. Анчах çакă вăл парти речĕсен пĕрлĕхне сыхлассишĕн кĕрешессине хавшатма юрать тенине, революцилле сыхăлăха хавшатма юрать тенине пĕлтермест. Пирĕн парти йĕри-тавралăха шута илмесĕр ĕçлесе пурăнма пултараймасть. Капитализм юлашкийĕсемпе буржуалла идеологи палăрăмĕсем партири хăшпĕр çирĕпех мар элементсене влияни памасăр тăма пултараймаççĕ, пирĕншĕн ют шухăшсене чĕрĕлме пулăшмасăр тăма пултараймаççĕ. Çавăнпа та партие хирĕçле элементсене хирĕç тăтăклăн, ним хĕрхенмесĕр кĕрешесси пирĕн парти пĕрлĕхне сыхласа çирĕплетес ĕçри питĕ кирлĕ задача пулать.

Парти пĕрлĕхлĕ пулмаллин, унăн речĕсем пĕтĕçӳллĕ пулмаллин чи кирлĕ условийĕсенчен пĕри вăл демократилле централизм принципĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыни пулать. Ку вăл çакна пĕлтерет: партие ертсе пыракан органĕсене пурне те, аялтан пуçласа çӳле çитиччен, суйласа лартассине, парти органĕсем хăйсен парторганизацийĕсем умĕнче вăхăтран-вăхăта отчет тăвассине, парти дисциплинине çирĕп пулмаллине тата сахалрахăшĕ ытларахăшне пăхăнса тăмаллине, партин аслă органĕсем йышăннă решенисем кĕçĕнрех органсемшĕн пĕр сăмахсăрах обязательнă пулмаллине пĕлтерет.

Парти централизмпа демократизма, партири организацилĕхпе дисциплинăна коммунистсен пуçарулăхĕпе пĕтĕçтерет. Вăл коммунистсемпе пĕтĕм халăха пуçарулла ĕçлеме воспитани парать. Коммунистсен партийĕ коммунизм обществи тăвас тĕлĕшпе туса пыракан нумай енлĕ ĕçсем партин шалти демократине пур майсемпе те вăйлатса пыни çинче никĕсленсе тăраççĕ. Çакă вăл парти массисен активлăхĕпе пуçарулăхне, пур коммунистсемшĕн те обязательнă пулса тăракан ăнланулла дисциплинăна тĕреклетмелли тата тăклă услови пулса тăрать.

Партин шалти демократийĕн принципĕсене пурнăçласа пыни коллективлăн ертсе пыма, парти органĕсем мĕнле ĕçленине парти массисем енчен тĕрĕслесе тăма май парать. Коммунистсен партийĕн ертсе пырас ĕçри вăйĕ—вăл коллективлă та пĕтĕçӳллĕ пулнинче.

Партин шалти демократине сарса пырасси критикăпа самокритикăна вăйлатмасăр пулма пултараймасть. Критикăпа самокритика çитменлĕхсемпе йăнăшсене хирĕç кĕрешес ĕçре партин тĕрĕсленнĕ хĕçпăшалĕ пулса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ партин XIX-мĕш съезчĕ парти организацийĕсене самокритикăна тата уйрăмах аялтан килекен критикăна сарса пырас задача çине тимлĕ пăхма хушрĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕ парти организацийĕсене идеологилле ĕçе хавшаманнине пĕтерме, идеологилле йăнăшсемпе пăсăклăхсем çине либералла, тимсĕр пăхнине хирĕç тăтăклăн кĕрешме, хамăрăн кадрсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе хатĕрлес ĕçе пĕрмаях вăйлатса лайăхлатса пыма, совет çыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре идеологилле вăйăн мĕнпур хатĕрĕсемпе, пирĕн пропагандăпа, агитаципе, пичетпе усă курма хушса хăварчĕ.

Коммунист — партин политикăлла борецĕ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ — революциллĕ кĕрешӳ партийĕ. Вăл аслă революцилле тĕллевсене наука енчен никĕслесе вĕсем çинчен пĕлтерет кăна мар, çавăн пекех вĕсене пурнăçлассишĕн те çине тăрса кĕрешет.

Коммунистсен партийĕ пирĕн халăхăн тĕрĕсленнĕ воспитателĕпе руководителĕ, пирĕн ĕмĕрĕн ăсĕ, чысĕ тата совеçĕ пулса тăрать. Совет халăхĕн хавхалантарса тата организацилесе пыракан вăйĕ пулса тăракан Коммунистсен партийĕн членĕ ятĕнчен хисеплĕрехххи урăх нимĕн те çук.

Коммунистсем — пирĕн вăхăтри малта пыракан çынсем, вĕсем хăйсен пĕтĕм вăйĕсемпе пĕлĕвĕсене коммунизмшăн кĕрешес ĕçе параççĕ. Коммунистсем совет халăхĕн шанчăклă тата хăюллă ывăлĕсем, ĕççыннисен интересĕсемшĕн çине тăрса хастарлăн кĕрешекен боецсем пулса тăраççĕ.

Коммунист хăйĕн мĕнпур ĕçĕсене, хăйĕн кашни утăмне пĕрлĕхлĕ ĕç интересĕсене, партипе государство интересĕсене пăхăнтарма, парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешекен активлă боец пулма тивĕç. «Парти членĕшĕн,—тенĕ Уставра,—парти решенийĕсемпе килĕшни çеç çителĕксĕр, парти членĕ çав решенисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме тивĕç. Коммунистсем парти решенийĕсем тĕлĕшпе хăйсене пассивлă тата формально тытни партин кĕрешӳри пултарулăхне хавшатать, çавăнпа та хăйсене ун пек тытакансем парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ мар».

Коммунистсен партийĕн членĕн хисеплĕ ячĕ коммунистсене парти политикине тата унăн решенийĕсене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пыма хушать. Парти решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешесси пар-

Редакцие килнĕ ҫыру

Пулнă йăнăшсене тӳрлетмелле

Сĕрпӳ районĕнчи Шĕнерпе Энĕшхĕрри тата Чиричкасси ялĕсен хушши инҫе мар, километр ҫурă ҫеҫ шутланать. Виҫĕ ялĕ те, акмалли ҫĕр лаптăкĕ тĕлĕшĕнчен тата ытти енĕпе те—пĕр пек условисенче. Анчах ку ялсенчи колхозсем, хуҫалăхпа экономика енчен пăхсан, пĕр-пĕринчен нумай уйрăлса тăраҫҫĕ.

Энĕшхĕррипе Чиричкассинчи пĕчĕк артельсем пĕрлешсе Хрущев ячĕпе тăракан колхоз тунă хыҫҫăн пысăк колхозăн пурнăҫĕнче татăклă улшăнусем пулчĕҫ. Пĕрлешсе вăйланнă колхоз ҫĕрĕҫ культурине часах хăпартрĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме ҫирĕп база туса хучĕ. Тырпул тухăҫĕ вăйлă ӳснипе Хрущев ячĕпе тăракан колхозра иртнĕ ҫулта кашни ĕҫкунĕ пуҫне 3-шер килограмм тырă, пахча ҫимĕҫ тата выльăх апачĕ нумай валеҫрĕҫ.

Ку колхозăн уй-хирĕсенче кăҫал тата вăйлăрах тырпул ҫитĕнет. Обществăлла тупăш ӳснĕ май колхозра строительство ĕҫĕсем анлăн сарăлчĕҫ. Выльăх-чĕрлĕх валли стандартлă витесем туса ҫитернĕ хыҫҫăн, колхозниксем пысăк клуб тума тытăнчĕҫ.

Шĕнерти «Глиссер» колхозăн пурнăҫĕнче ун пек улшăнусем пулаймарĕҫ. Иртнĕ ҫулта вăл ялхуҫалăх культурисен тухăҫне ӳстермелли плана 50 процент ытларах ҫеҫ тултарчĕ. Обществăлла хуҫалăх отраслĕсем аталанайманнипе колхозниксен тупăшĕ те ӳсеймест.

Шĕнер ялĕнче пурĕ те 70 хуҫалăх ҫеҫ. Пĕчĕк колхозăн пайланман фончĕ сахал, иртнĕ ҫулта ку фонда пурĕ те 25 пин тенкĕ ҫеҫ хывнă. Ҫавăн пирки вăл пысăк тухăҫлă ăратлă выльăхсем, минераллă удобренисем, ĕҫ хатĕрĕсем, строительство материалĕсем нумаях туянаймасть, тупăш паракан отраслĕсене аталантараймасть.

Шĕнер ял Советне кĕрекен «Красный этновец» колхозра та ҫавнашкалах. Пĕрлешмесĕр юлнă пĕчĕк колхоз хăйĕн обществăлла хуҫалăхне хăвăрт аталантараймасть.

«Глиссер» тата «Красный этновец» колхозсене ыттисемпе пĕрлешме, ҫапла вара обществăлла хуҫалăха вăйлăн аталантармалли тĕрĕс ҫул ҫине тăма мĕн чăрмантарнă-ха?

Виҫĕ ҫул каярах, районти колхозсем пĕрлешме тытăнсан, Шĕнер ял Советĕнчи пĕчĕк артельсене пĕрлештерес ыйту та сивĕччĕн тухса тăчĕ. Ҫак пысăк та ответлă ĕҫсене туса иртерме тытăнчĕҫ, анчах вĕҫне ҫитерме тăрăшмарĕҫ. Кунта чи малтан КПСС райкомĕпе райисполком ун чухне тĕрĕс мар туни ҫинчен калама тивет.

Шĕнер ял Советне малтан райком секретарĕ Д. Кирпичев юлташ пырса кайрĕ.

— Эсир хăш колхозсемпе пĕрлешесси хăвăр ирĕкĕртен килет,—терĕ вăл.— Пур енчен те тĕрĕс пăхса шутлăр, йăнăшмалла тăвас марччĕ.

Акмалли ҫĕрсем юнашар тата ялсем хушши сывăх пулнине шута илсе, Шĕнерти «Глиссер» колхоз членĕсем хăйсене Энĕшхĕрринчи тата Чиричкассинчи колхозсемпе пĕрлештерме ыйтнăччĕ. Ҫавăн пек условисене шута илсех, Энĕшкассинчи «Красный этновец» колхоза хальхи Молотов ячĕпе тăракан колхозпа пĕрлештерес ыйтăва тăратнăччĕ.

1951 ҫулти февральте ял Советне райисполком председателĕн ун чухнехи заместителĕ Н. Григорьев тата финанс пайĕн заведующийĕ Ф. Иванов юлташсем пычĕҫ. Колхозниксем хăйсен шухăшĕсене каласа пачĕҫ, анчах Григорьевпа Иванов юлташсем вуҫех урăхла проект тăратрĕҫ, райкомпа райисполком ячĕпе, вĕсем «Глиссер» тата «Красный этновец» колхозсене иккĕшне пĕрлештерме сĕнчĕҫ. Тавлашу нумая пычĕ, анчах Григорьевпа Иванов юлташсем хăйсен сĕнĕвнех йышăнма хистерĕҫ.

Икĕ пĕчĕк артеле пĕрлештерсе пĕр колхоз тунă хыҫҫăн председатель суйламалла пулчĕ. Ку ĕҫре вара райком тата пысăк йăнăш турĕ. Вăл сĕннипе колхоз председателĕ пулма А. Семенов «зоотехника» суйларĕҫ. Райком районти кадрсене пĕлменнине ҫирĕплетсе пама Семенов ҫинчен кĕскен каласа кăтартăпăр.

Нумай ҫул каярах Семенов зоотехниксен ҫулталăклăх курсĕнче вĕреннĕ. Вăл зоотехник пулса хăйне ĕҫре палăртнине никам та курман. Тĕменле майпа вăл юридически курса вĕренме кĕнĕ, ун хыҫҫăн адвокат, судья, каллех адвокат пулса ĕҫленĕ. Хăйĕн ĕҫри вырăнĕпе усă курнăшăн, совет законĕсене киревсĕр пăснăшăн Семенова суд органĕнчен кăларса янă.

Нумай та вăхăт иртмен, Семенов районти перекет касси заведующийĕ пулса тăнă, анчах мĕнпур ĕҫе пăтраштарса янă хыҫҫăн вăл часах унтан та сирпĕнсе тухнă.

Ҫак ҫынна ĕнтĕ, райком сĕннипе, вăл зоотехник тесе, пĕрлешнĕ колхоз председателĕ пулма суйланă. «Зоотехник» колхоза ҫитнĕ те, ĕҫлеме тытăниччен колхоз тыррине сутса ĕҫме тытăннă. Мухмăрлă-сухмăрлă ҫын «ертсе пыракан» пĕрлешнĕ колхозран каллех икĕ пĕчĕк колхоз туса хучĕҫ. Уйрăлнă хыҫҫăн Семенов «Красный этновец» колхоз председателĕ пулса ĕҫлерĕ, кунтан вара ăна, преступленилле ĕҫсем тунăшăн, каллех хăваласа ячĕҫ.

Икĕ пĕчĕк те вăйсăр колхозсене пĕрлештерес ĕҫĕн историйĕ ҫавăнпа вĕҫленчĕ. Чăн та, ҫӳлти ертсе пыракан органсем тĕрĕсленĕ хыҫҫăн Григорьевпа Иванов юлташсене, колхозсене пĕрлештерес ыйтăва сӳтсе явнă чухне колхозăн шалти демократи йĕркисене пăснăшăн, ответ тыттарчĕҫ.

Халĕ ыйту тухса тăрать: «Глиссер» тата «Красный этновец» колхозсене пĕрлештерме тытăннă чухне райкомпа райисполком хăйсем енчен те пысăк йăнăш турĕҫ пулсан, ҫав йăнăшсене мĕншĕн тӳрлетмерĕҫ?

Пирĕн шутпа ҫак пысăк та кирлĕ ыйтăва татса памасăр хăварни пĕртте тĕрĕс мар. Пĕчĕк колхозра производительнăй вăйсене аталантарма анлă майсем ҫукки не курса, «Глиссер» тата «Красный этновец» колхоз членĕсем ытти артельсемпе пĕрлешес шухăшпа пурăнаҫҫĕ.

Асăннă колхозсене пĕрлештерни пуҫламăш парторганизацисене тĕреклетме, ҫавна май партилле-организацилле, партилле-политикăлла ĕҫĕн шайне ҫӳлерех пусăма хăпартма май парĕччĕ. Сăмахран, «Глиссер» колхоза Хрущев ячĕпе тăракан колхозпа пĕрлештерес пулсан, унти пуҫламăш парторганизаци йышĕ партбюро тумаллăх ҫитĕччĕ.

«Красный этновец» колхозра халĕ пуҫламăш парторганизаци ҫук. Колхозниксене политикăлла воспитани парас енĕпе ĕҫ питĕ начар тăрать. Колхоз председателĕ П. Матвеев юлташ КПСС членĕн кандидатĕнче тăратчĕ. Ăна та, хăйне тĕрĕс мар тытканăшăн, коммунист ятне пăснăшăн, парти ретĕнчен кăларчĕҫ.

Колхозниксен пирвайхи ыйтăвне тивĕҫтерсе, «Красный этновец» колхоза кӳршĕллĕ ялсенчи Молотов ячĕпе тăракан артельпе пĕрлештерсен, «Красный этновец» колхоза та парторганизаци влиянийĕ ҫитме пултарĕччĕ.

«Глиссер» колхозри пуҫламăш парторганизаци вăйсăр мар. Коммунистсем пурте ответлă вырăнсенче ĕҫлеҫҫĕ. Парторганизаци секретарĕ И. Григорьев тата правлени председателĕ И. Яковлев коммунист тӳрĕ кăмăллă колхозниксем хăйсен колхозне кӳршĕллĕ ялсенчи вăйлă колхозпа пĕрлештерме ыйтнине лайăх пĕлеҫҫĕ. Анчах вĕсем ҫак пысăк ыйтăва ҫĕнĕрен пуҫарса яма, колхозниксен ыйтăвне тивĕҫтерме шутламаҫҫĕ.

Хăй вăхăтĕнче пĕрлешмесĕр юлнă колхозсене халĕ пĕрлештерес ыйтăва райкомпа райисполком иртсе кайнă, пĕчĕк ĕҫ вырăнне ҫеҫ хураҫҫĕ пулсан, ку вăл вĕсен енчен тепĕр йăнăш туни пулать. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем колхозсене организаципе хуҫалăх тĕлĕшĕнчен малалла тата вăйлăн тĕреклетсе пыма хушаҫҫĕ. Пирĕн шутпа «Глиссер» тата «Красный этновец» колхозсене пĕрлештерес вăхăт иртмен. Ку ыйтăва хальтерех тĕрĕс татса пани икĕ колхоза та йывăрлăхран хăтарма, обществăлла хуҫалăха вăйлăн аталантармалли, колхозниксен материальнăй пурнăҫĕпе культурине лайăхлатмалли анлă ҫул ҫине кăларма май парĕччĕ.

А. АНДРЕЕВ,

Шĕнерти территориальнăй пуҫламăш парторганизаци секретарĕ.

Тĕрĕслеме янă ҫырусем тăрăх

Элĕк районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхозра тырпул туса илмелли плана ҫулленех тултарса пыманни, колхоз руководителĕсем тимсĕррине тата ҫаврăнăҫусăррине пула тырпул, пахча ҫимĕҫ, арпа-улăм нумай ҫухатни (ҫĕрулми шăнтса яни, тырпула выльăхсене ваттарни), обществăлла выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс пăхса усраманни, ҫакна май колхоза пысăк сиен кӳни ҫинчен ҫыру килнĕччĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцийĕ ҫырăва тĕрĕслеме КПСС Элĕк райкомне янăччĕ.

КПСС Элĕк райкомĕ ҫырура фактсене тĕрĕс кăтартни, айăплисене ответ тыттарас шутпа ĕҫе районти прокурора пани ҫинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцине Сĕнтĕр районĕнчи «Знамя» колхозри ДОСААФ пуҫламăш организацийĕ ĕҫлемени ҫинчен килнĕ ҫырăва редакци тĕрĕслеме Чăваш АССР ДОСААФ оргкомитетне янăччĕ.

Республикăри ДОСААФ оргкомитечĕ ҫырура асăннисем тĕрĕс пулни ҫинчен пĕлтерчĕ. «Знамя» колхозри ДОСААФ организацийĕн ĕҫне лайăхлатасси ҫинчен колхозри комсомолецсен усă пухăвĕнче сӳтсе явнă. Комсомолецсем пурте ДОСААФ членне кĕнĕ, пуҫламăш организацине ертсе пыма активлă комсомолеца П. И. Иванов юлташа суйланă.

* * *

Ишлей районĕнчи Хыркасси ялповĕн чайнăйĕнчи ҫитменлĕхсем ҫинчен ҫырнă ҫырăва «Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцийĕ Ишлей райпотребсоюзне, ҫитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕҫлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Райпотребсоюз ҫырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни, чайнăй заведующине Яковлева вырăнтан кăларни, Скворцова буфетчицăна ĕҫе лайăхлатмасан ответ тыттарасси ҫинчен астутарни ҫинчен пĕлтерчĕ.

* * *

Йĕпреҫ районĕнчи «10 лет Октября» колхозри уйрăм работниксем суя документсем туса 3.900 тенкĕ хăйсем ҫумне чикни ҫинчен калакан ҫырăва «Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцийĕ Йĕпреҫ районĕн ялхуҫалăх пайне янăччĕ.

Ялхуҫалăх пайĕ ҫырура асăннисене райисполком ларăвĕнче сӳтсе явни, айăплисене суда парса ответ тыттарма йышăнни ҫинчен пĕлтерчĕ.

Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫе ҫулленех вăйлатса пырать. Выльăхсене хĕл каҫарма апат хатĕрлеҫҫĕ, ҫĕнĕ витесĕм тăваҫҫĕ. Халĕ шлак-бетонран 40 сысна ами валли ҫĕнĕ вите тăваҫҫĕ.

УКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Л. Михайлова, Н. Васильева, Н. Андреева колхозницăсем шлак-бетонран кирпĕч тăваҫҫĕ.

Г. ВИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Вĕренӳ ҫулне хатĕрленеҫҫĕ

Советскинчи вăтам шкулта ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне тимлĕн хатĕрленме тăрăшаҫҫĕ. Шкулти столяр Н. Терентьев классенчи парттăсемпе доскасене тата чӳрече рамисене юсаса ҫирĕплетме тытăнчĕ. Коридорсемпе классене, залсене, кабинетсене сӳса тасатрĕҫ. Халĕ шкул сургне тул енчен хăма ҫапаҫҫĕ. Шкул валли вутă кӳрсе килчĕҫ.

Д. СЕМЕНОВ.

* * *

МУРКАШ. Тивĕшри вăтам шкул ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулне тимлĕн хатĕрленет. Ҫак кунсенче шкул валли 130 кубометр вутă кӳрсе килнĕ. Кунсăр пуҫне, 50 тонна торф илсе килме палăртнă. Шкула тата учительсен хваттерĕсене юсама строительство материалĕсем хатĕрлеҫҫĕ. Кунта хăппăр пĕчĕк ĕҫсене тума пуҫăннă ĕнтĕ.

Шкулти пĕтĕм юсав ĕҫĕсене августăн 15-мĕшĕччен туса пĕтерме палăртнă.

А. ЛЕОНТЬЕВ.

Курортсемпе санаторисенче

Пирĕн государство ĕҫҫыннисен ырлăхĕпе сывлăхĕшĕн куллен тăрăшать. Рабочисемпе служащисем, соцстрах енĕпе путевкăсем илсе, Тăван ҫĕршыври курортсемпе санаторисенче канаҫҫĕ.

Иртнĕ ҫулта Куславккари суртсем тăвакан заводран 101 ҫын курортсенче канса килнĕ. Кăҫал завод коллективне санаторисемпе кану ҫурчĕсене кайма 153 путевка параҫҫĕ. Ҫак уйăхсенче 22 ҫын завком панă путевкăсемпе усă курнă. Хăма ҫуракан цехри контролер Н. Меняевпа платник А. Кирбитов—Сочире, механически цех токарĕ Г. Бабкин—Ессентукинче, Н. Акшаев рабочи — Сергиевски курортра пулнă. Чылай рабочисем Юринăри, Ильинкăри тата ытти канмалли ҫуртсенче канаҫҫĕ.

(Хамăр инф.).

Пĕвесем тунă

КӲКЕҪ. Апаш ялĕ ҫумĕпе Шĕнер юханшывĕ юхса выртать. Ҫак шыва чарма ял ҫыннисем пĕвесем чылай тунă. Шывпа хуҫалăхра анлă усă кураҫҫĕ.

Ҫак кунсенче колхозниксем, опытлă бригадир П. Христанов юлташ ертсе пынипе, тепĕр пĕве турĕҫ. Унăн тăршшĕ 500 метр, сарлакăшĕ—50 метр. Ҫак пĕвере пулă ĕрчетме палăртнă. Халĕ унта карас тата хура пулă янă.

Н. ДАНИЛОВА.

ти членĕшĕн хисеплĕ тивĕҫ, парти умĕнчи пысăк ĕҫ пулать.

Парти Уставĕ кашни коммуниста партире тăманнисене ертсе пыраканĕ пулма, ĕҫре кăтартуллă пулма, хăйĕн ĕҫ техникине вĕренсе пĕлме, хăйĕн производствăри, ĕҫри квалификацине пĕрмаях ӳстерсе пыма, совет стройĕн никам тĕкĕнеймин таса никĕс пулса тăракан обществăлла социализмла харпăрлăха пур майсемпе те сыхласа усрама тата тĕреклетме хушать.

Коммунист малта пыракан боец ролĕнче вăл марксистла-ленинла теорипе хĕҫпăшалланас, хăйĕн ăнлануăхне ӳстерес тĕлĕшпе куллен ĕҫленĕ чухне кăна пурнăҫлама пултарать. Кашни коммунист марксистла теорине ăнланса илме, практикăлла ĕҫсене татса панă чухне марксистла-ленинла теорипе усă курма пĕлме тивĕҫ.

Марксизм-ленинизм ҫапла вĕрентет: пирĕн парти вăйĕ тата никам ҫĕнтерейменлĕхĕ вăл анлă массăсемпе ним уйрăлми тачă ҫыхăну тытса тăниче пулать. КПСС Уставĕ парти членĕсене ҫапла тума хушать: «массăсемпе ҫыхăнса тăрассине куллен ҫирĕплетсе пымалла, ĕҫҫыннисен ыйтăвĕсемпе вĕсене мĕн кирлине вăхăтра туса памалла, партире тăман массăсене парти политикипе решенийĕсен тĕп шухăшне ăнлантарса памалла».

Кашни коммунист кирек мĕнле ĕҫре те, пысăккинче те, пĕчĕккинче те, партипе государство интересĕсене пăхăнма, партин мĕнпур членĕсемшĕн пĕр пекех обязательнăй пулса тăракан дисциплинăна тытса пыма тивĕҫ. Партипе государство дисциплинине пăсни питех те киревсĕр ĕҫ пулса тăрать, партие сиен кӳрет, ҫавăнпа та дисциплинăна пăсакансем парти ретĕнче пулма тивĕҫлĕ мар.

Парти Уставĕ коммуниста самокритикăна тата аялтан килекен критикăна аталантарса пыма, ĕҫри ҫитменлĕхсене тупса палăртма, вĕсене пĕтерсе пыма, ҫитĕнӳсемпе шавлăн мухтаннине тата ĕҫри ăнăҫусемпе ҫырлахса ларнине хирĕҫ кĕрешме, критикăна хĕссе пусаракансене хирĕҫ кĕрешме хушать.

Ĕҫĕн кирек хăш участокĕнче пулсан та, парти членĕн кăтартуллă пулмалла, ҫитменлĕхсене хирĕҫ вăйлăн кĕрешмелле. Парти членĕн ĕҫри ҫитменлĕхсем ҫинчен, вĕсем камран килнине пăхмасăр, партин ертсе пыракан органĕсене, Центральнăй Комитет таранах пĕлтермелле. Парти членĕн ĕҫсем начар тăнине пытарса тăма, парти тата государство интересĕсене сиен кӳрекен ĕҫсем патĕнчен иртсе кайма право ҫук. Кам та кам парти членне ҫак тивĕҫе пурнăҫлама кансĕрлет, ăна, парти ирĕкне пăсакан ҫын вырăнне хурса, хытă айăпламалла.

Коммунистăн ырă пахалăхĕ — вăл парти умĕнче тĕрĕс те тӳрĕ ҫын пулни. Парти мĕнпур коммунистсемпе мĕнпур совет ҫыннисене тӳрĕ те тĕрĕс кăмăллă пулма воспитани парать. Парти хăйĕн речĕсенче суеҫтерекенсене тӳссе пурăнма пултараймасть.

Пирĕн партипе совет государствине малалла тĕреклетмелли питех те кирлĕ услови вăл коммунистсем политика тĕлĕшпе питĕ сыхăлăхлă пулни, тăшмансен тĕрлĕ хăтланăвĕсене хирĕҫ вирлĕн кĕрешни пулать. КПСС Уставĕ партин кашни членне партипе государство вăрттăнлăхне тытса тăма хушать. Партипе государство вăрттăнлăхне ыттисене пĕлтерни преступлени туни пулать, ун пек ĕҫ тăвакансем парти ретĕнче пулма тивĕҫлĕ мар.

Парти Уставĕ коммунистсене парти хушнă кирек мĕнле ĕҫре те кадрсене вĕсен политикăлла тата ĕҫлĕ пахалăхне кура тĕрĕс суйласа илесси ҫинчен парти кăтартса панисене ҫирĕп пурнăҫа кĕртсе пыма хушать.

Устав парти членĕ умне ответлă обязанноҫсем кăларса тăратнипе пĕрлех ăна пысăк правасем те парать. Уставра парти членĕсен обязанноҫĕсемпе прависем пĕрлĕхлĕ пулни палăрса тăрать. Парти членĕн ҫакăн пек право пур: парти пухăвĕнче е парти пичетĕнче парти политикин ыйтăвĕсене ирĕклĕн те ĕҫлĕн сӳтсе явнă ҫĕре хутшăнма; парти пухăвĕсенче партин кирек хăш работникне те критиклеме; парти органĕсене суйлама тата суйланма; хăйĕн ĕҫĕ ҫинчен е хăйне хăй мĕнле тытканани ҫинчен решени йышăннă вăхăтра пур чухне те унта хăйне чĕнтерме требовани лартма; кирек мĕнле ыйтупа та тата заявленипе те партин кирек хăш инстанцине, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ таранах, ҫитме право пур.

Парти членĕн обязанноҫĕсемпе прависем, парти Уставĕнче питех те уҫăмлăн кăтартса панăскерсем, коммунизм строительствин пур участокĕсенче те коммунистсен активлăхне ӳстерме условисем туса параҫҫĕ.

КПСС Уставĕ парти организацийĕсен кĕрешӳ пултарулăхне ӳстерет

Коммунизм строительствин задачисене пурнăҫлассишĕн пыракан кĕрешӳре партин вырăнсенчи организацийĕсен пĕлтерĕшĕ пĕрмаях ӳссе пырать.

Уставра партин облаҫсенчи, крайсенчи, республикăсенчи, округсенчи, хуласенчи, районсенчи организацийĕсен тата пуҫламăш организацийĕсен функцийĕсем ҫинчен питех те тĕплĕн ҫырса панă. Уставра кăтартса панисене пурнăҫлани партин вырăнсенчи организацийĕсене партилле-организацилле, партилле-политикăлла ĕҫсене тата ҫӳлĕрех пусăма ҫĕклеме, парти членĕсене идея тĕлĕшпе пиҫĕхтерес, мĕнпур ĕҫҫыннисене коммунизмла воспитани парас ĕҫсене лайăхлатма май парать. КПСС Уставĕ парти организацийĕсене малалла тĕреклетме, парти политикине пурнăҫа кĕртессишĕн пыракан кĕрешӳре вĕсен активлăхне ӳстерме хушать.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăҫа кĕртни парти организацийĕсен идейăлла пурнăҫне малалла лайăхлатма, парти ĕҫне ҫӳлĕрех пусăма ҫĕклеме, хуҫалăхпа культура строительствин задачисене татса парассишĕн тата пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллăх плана срокчен пурнăҫлассишĕн пыракан кĕрешӳре коммунистсемпе партире тăманнисен активлăхĕпе творчествăлла пуҫарулăхне вăйлатма пулăшать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ хыҫҫăн парти комитечĕсен пленумĕсем, парти активĕн районсемпе хуласенчи пухăвĕсем тăтăшах иртме пуҫларĕҫ. Парти организацийĕсем массăсем критиклесе асăрхаттарнисем ҫине тимлĕрех пăхма, вĕсен сассине итлеме, производство новаторĕсен творчествăлла пуҫарăвĕсене лайăхрах сарса пыма тытăнчĕҫ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем партин шалти демократине пĕр пăркаланмасăр пурнăҫласа пыма, партипе государство дисциплинине ҫирĕплетме, пуҫламăш парторганизацисене кулленех конкретлăн ертсе пырас ĕҫе вăйлатма, критикăпа самокритикăна малалла сарса пыма май параҫҫĕ. Пирĕн ҫĕршывра коммунизм тăвас ĕҫре парти организацийĕсен кĕрешӳри пултарулăхĕ ӳснĕҫемĕн ӳссе пырать.

Пирĕн парти, хăйĕн речĕсен пĕрлĕхĕпе пĕтĕҫӳлĕхне тимлĕн сыхласа, халăхпа ҫыхăну тытассине анлăлатса тата ҫирĕплетсе пырса, вуншар ҫул хушшинчи кĕрешӳре туса хатĕрленĕ политикăна пĕр пăркаланмасăр пурнăҫласа, совет халăхне малалла, коммунизм ҫĕнтерĕвĕ патне илсе пырать.

Г. ШАБАЕВ,

Истори наукисен кандидачĕ.

Колхозсемпе совхозсенче ĕнесен сĕт тухăҫлăхне ӳстерессишĕн пыракан социализмла ăмăртăвăн итогĕсем

(1953 ҫулхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне)

Йышăннă вырăн	Район, колхоз ячĕсем	Колхоз председателĕсен, совхоз директорĕсен хушамачĕ	Кашни сăвакан ĕнерен сĕт суса илнĕ (литрпа)
1.	Ҫĕрпӳри государство селекци станцийĕ	Лукьяненко Я. Ф.	1.732
2.	Чăвашсен ялхуҫалăх институчĕн вĕренӳ хуҫалăхĕ	Калинцев Г. И.	1.420
3.	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	Юхтанов Ф. П.	1.365
4.	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	Митин М. С.	1.108
5.	Улатăрти махорка совхозĕ	Корольков П. М.	981
6.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	Князьков М. Н.	904
7.	Госконюшня	Мельников М. Н.	897
8.	Ҫĕрпӳ районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	Васильев И. В.	864
9.	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	Коротков С. К.	852
10.	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	Андреев Е. А.	784
11.	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	Рыбаков Н. И.	748
12.	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	Хайлов М. И.	718
13.	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	Долгов М. Г.	701
14.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	Зайцев В. В.	666

Дояркăсен ăмăртăвĕ

Сĕт нумай суса илес ĕҫре малта пыракансем. Кăҫалхи пилĕк уйăх хушшинчи итогсем

Йышăннă вырăн	Хушаматсем	Район, колхоз ячĕсем	Кашни сăвакан ĕнерен сĕт суса илнĕ (литрпа)
1.	Ефимова А. Е.	Ҫĕрпӳри государство селекци станцийĕ	
2.	Митрофанова О. М.	—»—	1.989
3.	Федорова А. Ф.	—»—	1.945
4.	Лукина О. Л.	—»—	1.791
5.	Григорьева А. Г.	—»—	1.575
6.	Селиванова А. С.	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	1.598
7.	Порфирьева А. П.	Чăвашсен ялхуҫалăх институчĕн вĕренӳ хуҫалăхĕ	1.442
8.	Молчанова К. М.	Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз	1.429
9.	Андреева З. А.	—»—	1.397
10.	Дубынина А. Н.	—»—	1.341
11.	Степанова М. И.	—»—	1.206
12.	Кузовенкова М. П.	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	1.197
13.	Сергеева Л. С.	Йĕпреҫ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	1.154
14.	Лебедева О. А.	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	1.153
15.	Ганюшкина М. Ф.	—»—	1.141
16.	Харитонова А. Н.	—»—	1.115
17.	Смирнова Н. Н.	Улатăрти махорка совхозĕ	1.088
18.	Трошкина А. С.	—»—	1.031
19.	Горбунова З. П.	Госконюшня	1.001
20.	Табакова Л.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	998
21.	Бурлакова Н. П.	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	993
22.	Порфирьева М. П.	Вăрнар районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхоз	985
23.	Воложинова С. Д.	Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз	982
24.	Филиппова А. Ф.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	979
25.	Потапова И. Е.	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	979
26.	Пронина Р. С.	Улатăрти махорка совхозĕ	976
27.	Жирнова Н. Н.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	963
28.	Тужилкина	Улатăрти махорка совхозĕ	958
29.	Матвеева У. М.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	944
30.	Крылова Т. Н.	—»—	943
31.	Яковлева Н. Я.	Йĕпреҫ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	931
32.	Викторова Ю. Г.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	928
33.	Баранова М. Г.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	925
34.	Ерошина Н. Д.	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	918
35.	Андреева Т. А.	Йĕпреҫ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	909
36.	Степанова М.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	908
37.	Иванова З. И.	—»—	907
38.	Филиппова Т. Ф.	Ҫĕрпӳ районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	907
39.	Ситухина К. А.	Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	904
40.	Кириллова З. К.	Ҫĕрпӳ районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	887
41.	Муравьева П. И.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	874
42.	Братанова Т. И.	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	870
43.	Петрова А. П.	Йĕпреҫ районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	867
44.	Васильева М. В.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	846
45.	Кириллова Р. К.	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	842
46.	Орлова М. В.	—»—	835
47.	Козлова Ф.	Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз	835
48.	Мразова А. Г.	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	834
49.	Бугачева Н. Е.	—»—	828
50.	Мишенькина А.	Етĕрне районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз	827
51.	Титова А. Т.	—»—	826
52.	Тодинова Ю. И.	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	809
53.	Александрова Н. А.	Етĕрне районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз	794
54.	Богомолова В. А.	Шупашкар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз	790
55.	Каулина А. Г.	Пăрачкав районĕнчи М. Горький ячĕпе тăракан колхоз	790
56.	Иванова М.	Канаш районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз	771
57.	Курбатова Н. Д.	Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз	763
58.	Плешкова М. П.	Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз	740
59.	Заплаткина П. В.	—»—	738
60.	Параманова А. П.	Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз	731
61.	Галкина У. В.	Вăрнар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхоз	729
62.	Васильева А. В.	—»—	724
63.	Храмова Л. В.	Улатăр районĕнчи «Путь Ленина» колхоз	721
64.	Кочеткова М. Я.	—»—	714
65.	Ильдейкина М. И.	Шупашкар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз	713
66.	Сармосова Х. Н.	Ишлей районĕнчи «За коммунизм» колхоз	705
67.	Маркина М. Н.	Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз	701
68.	Моряшова Н. С.	Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз	701
69.	Филиппова М. И.	Шупашкар районĕнчи «Красный флот» колхоз	700

СĔТ-ҪУ ПАРСА ТАТНĂ

ПЕРВОМАЙСКИ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз пĕлтĕр государствăна сĕт-ҫу памалли обязательствăна сентябрь уйăхĕнчех пурнăҫларĕ, ҫулталăк вĕҫлениччен 1953 ҫулшăн 8.000 литр ытла сĕт парса хучĕ.

Колхоз государствăна сĕт-ҫу памалли кăҫалхи обязательствăна, районти колхозсенчен чи малтан, июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне пурнăҫларĕ.

Колхоз халь сĕт ситес ҫул шучĕпе парать. Ку тарана ҫитсе государствăна 1954 ҫулшăн 1.600 литр сĕт панă та ĕнтĕ.

А. ТУКМАНОВ.

Совет Союзӗ Ирана саранчасене пӗтерме пулӑшать

ТЕГЕРАН, июнӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Тегеран хаҫачӗсем ҫапла пӗлтерессӗ: Иранри ҫӗрӗҫ министерстви июнӗн 24-мӗшӗнче Совет Союзӗн авиаци экспедицине йышӑннӑ. Экспедици кӑҫал Иранра саранчасене пӗтерес тӗлӗшпе ӗҫленӗ.

Ҫак йышӑнура ҫӗрӗҫ министрӗн ӗҫӗсене туса тӑракан Мансур Атаи Совет Союзӗн экспедици членӗсене вӗсем туса ирттернӗ ӗҫсемшӗн тав тунӑ, Иранри ялхуҫалӑх культурисемшӗн усал тӑшман пулса тӑракан саранчасене пӗтерес тӗлӗшпе Иранпа Совет Союзӗ пӗрле ӗҫлесси малашне те тӗрекленсе тата сарӑлса пырасса шанса сӑмах каланӑ.

Совет авиацийӗн экспедици начальникӗ Назаров юлташ ҫапла пӗлтернӗ: совет экспедицийӗн самолечӗсем апрель, май, июнь уйӑхӗсенче Фарс провинцийӗнче тата Иезда районӗнче саранча пусса илнӗ 42.670 гектар ҫӗр ҫинче тивӗҫлӗ ӗҫсем туса ирттернӗ. Ҫак ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче саранчасене пӗтӗмпех пӗтернӗ.

Итали парламенчӗн сессийӗнче

РИМ, июнӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Хайсен председателӗсене суйланӑ хыҫҫӑн депутатсен палатипе сенат хӑйсен бюровӗсене суйланӑ. Депутатсен палатин вице-председателӗсем пулма ҫаксене суйланӑ: коммунист Д'Онуфрис, социалист Тарджетти, христианла демократ Леоне тата либерал Мартино. Сенатӑн вице-председателӗсем: коммунист Скоччимаро, сулахай независимӑй Моле тата христианла демократсем Бо тата Де Пьетро.

Ӗнер каҫхи ларура министрсен совечӗн председателӗ де Гаспери депутатсен палатине вӑхӑтлӑх бюджет ҫинчен закон проекчӗ тӑратнӑ. Унӑн срокӗ октябрӗн 31-мӗшӗнче тухать. Ҫак вӑхӑт тӗлне парламентӑн уйрӑм министерствӑсен бюджечӗсене ырласа йышӑнмалла. Де Гаспери ҫапла пӗлтернӗ: парламент вӑхӑтлӑх бюджет ҫинчен тӑракан закон проектне ырласа йышӑнсанах правительство отставкӑна тухать.

Социалистсен партийӗн генеральнӑй секретарӗ Пьетро Ненни ытти социалист-депутатсемпе пӗрле пусӑ резолюци тӑратнӑ. Ҫак резолюци суйлав «реформине» пӑрахӑҫа кӑларма тата 1948 ҫулхи суйлав законӗ тепӗр хут вӑй илмелле тума сӗнет.

Италири ӗҫлев конфедерацийӗн генеральнӑй секретарӗ ди Витторио тата коммунистсемпе социалист-депутатсем правительство забастовкӑсене хутшӑннӑ государство служащийӗсене айӑпламалла тунине пӑрахӑҫа кӑларасси ҫинчен резолюци тӑратнӑ.

Японире мир уйӑхлӑхӗ иртерессӗ

ШАНХАЙ, июнӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Токиоран пӗлтернӗ тӑрӑх, Японире мир уйӑхлӑхӗ пуҫланнӑ. Уйӑхлӑха мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Япони комитечӗ тата чылай профсоюзсемпе ытти демократилле организацисем пуҫарнипе ирттерессӗ.

Мир уйӑхлӑхӗ Токиора июнӗн 25-мӗшӗнче ҫар базисем тунине хирӗҫ кӗрешме конференци уҫӑлнипе пуҫланнӑ. Токиори радио пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫак конференци ӗҫне профсоюзсемпе демократилле организацисен представителӗсем, ҫавӑн пекех ҫар базисем вырнаҫнӑ районсенчи халӑх представителӗсем 500 ҫынна яхӑн пухӑннӑ.

Корея халӑхӗ агрессорсене хирӗҫ паттӑр кӗрешме пуҫланӑранпа виҫӗ ҫул тултарнӑ ятпа Японире пур ҫӗрте те митингсемпе пухусем пулса иртнӗ. Митингра пулнисем Корейӑра халех перемири тӑвассишӗн тата пӗтӗм тӗнчипе мир ӗҫне сыхласа хӑварассишӗн кӗрешӗве вӑйлатма чӗнсе каланӑ.

Францири ҫӗнӗ правительство

ПАРИЖ, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви ҫапла пӗлтерет: Францин ҫӗнӗ правительствине ҫаксем кӗнӗ: министрсен совечӗн председателӗ Жозеф Ланьель («независимӑй республиканец»). Министрсен совечӗн председателӗн заместителӗсем: Поль Рейно («независимӑй республиканец»), Анри Кэй (радикал) тата Пьер-Анри Тетжен (МРП); конституци реформине пӑхса тӑракан портфельсӗр министр Эдмон Баррашен («республикӑпа социальнӑй кӗрешӗвӗн независимӑй ушкӑнӗ»), Европа совечӗ тӗлӗшпе ӗҫлекен портфельсӗр министр Франсуа Миттеран (хирӗҫ тӑракансен демократла тата социалистла союзӗ), портфельсӗр министр Эдуард Корнильон-Молинье («социальнӑй кӗрешӗвӗн республика союзӗ»), ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Жорж Бидо (МРП), юстици министрӗ Поль Рибейр («хресченсен партийӗ»), шахти ӗҫсен министрӗ Леон Мартино-Депла (радикал), наци оборонин министрӗ Рене Плевен (хирӗҫ тӑракансен демократла тата социалистла союзӗ) тата ыттисем те.

ИТАЛИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ПАРТИЙӖН ВЛИЯНИЙӖ ӲССЕ ПЫРАТЬ

РИМ, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). «Аванти» хаҫат Италири социалистсен партийӗн влиянийӗ ӳссе пыни ҫинчен пӗлтерет. Партие ытларах та ытларах ҫӗнӗ членсем кӗрессӗ. Фоджа провинцийӗнче 176 ҫын партие кӗме ыйтса заявлени панӑ. Сиена провинцийӗнче—54 ҫын, Витербо провинцийӗнче—78, Неаполь провинцийӗнче—336, Мацерата провинцийӗнче—11 ҫын заявлени панӑ.

Демократиллӗ Германи Республикин правительстви туса ирттерекен ӗҫсем

БЕРЛИН, июнӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Берлинра тухса тӑракан демократилле хаҫатсем Демократиллӗ Германи Республикин правительстви ӗҫҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе йышӑннӑ ҫӗнӗ решенисене пичетлесе кӑларнӑ.

Хаҫатсем, уйрӑммӑн илсен, Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗ фашистла провокацие пула ӗҫ вӑхӑтне сухатнӑшӑн укҫа тӳлемелле тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ решение, ремесла ӗҫӗпе уйрӑм харпӑрлӑхлӑ промышленноҫа вӑйлатма пулӑшакан ӗҫсем ҫинчен йышӑннӑ решение пичетлесе кӑларнӑ.

Ҫак решенире, уйрӑммӑн илсен, ҫапла каланӑ: Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑх предприятийӗсен ремесла производствине вӑйлатма хӑйсен запасри материалӗсене парса пулӑшмалла, ҫавӑн пекех уйрӑм харпӑрлӑхлӑ предприятисене те пулӑшмалла.

Демократиллӗ Германи Республикин правительстви халӑха строительство материалӗсем парса пулӑшассине лайӑхлатас тӗлӗшпе йышӑннӑ распоряжение пичетлесе кӑларнӑ. Правительство туса ирттерекен ҫак ӗҫсем ҫурт-йӗр строительствине пур ҫӗрте те хӑвӑрт аталантарма май парассӗ. Пурне те сутма тӗрлӗ строительство материалӗсем уйӑрнӑ.

Ҫавӑн пекех хаҫатсенче Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗ правительствӑн ҫак решенийӗсем халех вӑй илни ҫинчен тата вӗсем вырӑнти мӗнпур власть органӗсемшӗн обязательнӑй пулса тӑни ҫинчен кӑтартса панине пичетлесе кӑларнӑ.

Хӗвеланӑҫ Германири нимӗҫ патриочӗсем фашистла провокаторсене ылханассӗ

БЕРЛИН, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Хӗвеланӑҫ Германири ӗҫҫыннисем Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑхпа пӗрле Хӗвеланӑҫ Германине ют ҫӗршыв монополисчӗсене укҫалла тара кӗрӗшнӗ агентсем Берлинра тата Демократиллӗ Германи Республикинче организациленӗ фашистла провокацие хыттӑн сивлессӗ.

Ҫурҫӗр Рейн-Вестфали ҫӗрӗн ландтагне компартирен суйланӑ депутатсем хӑйсен заявленийӗнче ҫапла каланӑ: Берлинра тата Демократиллӗ Германи Республикинче пулса иртнӗ ӗҫсем нимӗҫ халӑхӗпе пӗтӗм тӗнчери халӑхсене хирӗҫ тунӑ провокацие тахҫантанпах хатӗрленине кӑтартса пачӗҫ. Ҫак ӗҫсен хавхалантаракан ӗҫсемпе организаторӗсем Германири тата пӗтӗм тӗнчери лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатассине кансӗрлесе тӑрас тӗллев тытнӑ.

Демократиллӗ Германи Республикин правительстви ӗҫҫыннисен пурнӑҫне лайӑхлатас тата Германи пӗрлӗхне туса хурас тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисен пысӑк пӗлтерӗшне палӑртса, депутат-коммунистсем ҫакна кӑтартса панӑ: Демократиллӗ Германи Республикин правительстви тунӑ ӗҫсене Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑхсем кӑна мар, мӗнпур мирлӗ пурнӑҫа юратакан нимӗҫсем ырласа йышӑнассӗ.

Берлинра тата Демократиллӗ Германи Республикинче пулса иртнӗ фашистла авантюра пирки политика тӗлӗшӗнчен тӗрлӗ шухӑшлӑ ҫынсем хыттӑн тарӑхассӗ.

«Хӗвелтухӑҫ Берлинри ӗҫсем ҫинчен малтанхи хыпарсем килсе ҫитсен эпӗ ҫапла каларӑм,—тенӗ Майн ҫинчи Франкфуртра ӗҫлекен доктор Юлиус Хан,—ҫак идея хӗвелтухӑҫӗнче ҫуралман. Юлашки вӑхӑтра килнӗ хыпарсенчен ҫакӑ паллӑ пулса тӑчӗ: Потсдам площадӗнче пулса иртнӗ ӗҫсем Дуйсбургра коммунистсен партийӗн бюровӗ ҫине тапӑннӑ чухне е Берлинра 1933 ҫулта рейхстага вут тӗртнӗ чухне туса ирттернӗ ӗҫсем пекех пулнӑ. Ҫак ӗҫсем мана акӑ мӗне ӗнентерчӗҫ—хӑйсен ответлӑхне туякан мӗнпур нимӗҫсен, кирек мӗнле чӑрмав пулсан та, килӗшӳ тӑвассине кирлӗ пек йышӑнса илмелле».

Берлинра пулнӑ фашистла йӗркесӗрлӗхсене хак парса, Дуйсбург-Хамборн хулинчи профсоюз деятелӗ Рейц ҫапла каланӑ: «Ку вӑл пирӗн пӗтӗм халӑхӑн демократилле прависене пырса ҫапни пулчӗ».

Бонн влаҫӗсем фашистла провокаци ҫинчен чӑнлӑха нимӗҫ халӑхӗнчен пытарса хӑварас тесе пур майсемпе те тӑрӑшассӗ. Майнцра тата Кайзерслоутернра полици Берлинра пулса иртнӗ фашистла провокацие тӑрӑ шыв ҫине кӑларакан пиншер листовкӑсене конфискациленӗ.

Берлинри демократилле хаҫатсем Мускав хулинчи ӗҫҫыннисен пухӑвӗсем ҫинчен

БЕРЛИН, июнӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Берлинра тухса тӑракан демократилле хаҫатсем ют ҫӗршывсене тара кӗрӗшнӗ ирсӗрсем Берлинра туса ирттернӗ провокацие хирӗҫлесе Мускавра пулса иртнӗ рабочисемпе служащисен пухӑвӗсем ҫинчен нумай ҫыраҫҫӗ.

Хаҫатсем И. В. Сталин ячӗпе, Владимир Ильич ячӗпе тӑракан, «Динамо», «Каучук» тата ытти заводсенче пулса иртнӗ пухусем ҫинчен пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ.

«Нейес Дейчланд» хаҫат Мускавран пӗлтернӗ хыпарсене пысӑк саспаллисемпе: «Мускаври ӗҫҫыннисем фашистсен Берлинри каварне хирӗҫ» тесе ят парса пичетлесе кӑларнӑ.

«Дер Морген» хаҫат Мускаври ӗҫҫыннисен пухӑвӗсем ҫинчен пӗлтернине: «Нимӗҫ ӗҫҫыннисене саламлани» текен заголовокпа пичетлесе кӑларнӑ.

Бонн правительстви Берлинра пулса иртнӗ провокаци ҫинчен калакан чӑнлӑха халӑхран пытарать

БЕРЛИН, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви Майн ҫинчи Франкфуртран ҫапла пӗлтерет:

Хӗвеланӑҫ Германири полици Майн ҫинчи Франкфуртра «Казелла-Ворке» предприятийӗн ҫурчӗ умӗнче «Зюддейче фольксцейтунг» хаҫатӑн васкавлӑ номерне туртса илнӗ. Ҫак хаҫатра Берлинра пулса иртнӗ фашистла провокаципе унӑн сӑлтавӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса ҫырнӑ. «Торпедо-верке АГ» заводӗнче те ҫак хаҫатӑн экземплярӗсене туртса илнӗ.

«Зюддейче фольксцейтунг» хаҫат ҫакӑн пирки ҫапла ҫырать: «Полици аслӑ влаҫсенчен Берлинра пулса иртнӗ ӗҫсене ӑнлантарса паракан хаҫатсене салатма чарасси ҫинчен кӑтарту илнӗ пулмалла, мӗншӗн тесен ҫакӑ Бонн правительствин ултавне тӑрӑ шыв ҫине кӑларать».

Англири общинӑсен палатине лейборист С. Дэвис тӑратнӑ резолюци

ЛОНДОН, июнӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Пресс Ассошиэйшн агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, лейборист Стивен Дэвис парламента резолюци тӑратнӑ. С. Дэвис общинӑсен палатине Хӗвелтухӑҫ Берлинра провокацилле ӗҫсем тума Берлинӑн Америка зонинче неофашистсене (ҫӗнӗ фашистсене) укҫа-тенкӗ парса тӑнӑшӑн тата хӗтӗртнӗшӗн тарӑхса калама сӗнет.

Резолюци Англи правительствине Америка правительстви провокацилле ӗҫсем тума чарӑнтӑр тесе хыттӑн хирӗҫлеме чӗнет. Резолюцире каланӑ тӑрӑх, США правительстви провокацилле ӗҫсем тума укҫа нумай панӑ.

Францире калаҫусем ирттерессишӗн тата миршӗн кӗрешес тӗллевпе ирттернӗ конференци йышӑннӑ решенисем

ПАРИЖ, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Паян калаҫусем ирттерессишӗн тата миршӗн кӗрешес тӗллевпе пухӑннӑ конференци хӑйӗн ӗҫне вӗҫленӗ. Конференцире тӗрлӗ сийсемпе политикӑлла партисен представителӗсем тухса каланӑ. Вӗсем пӗтӗм Франци халӑхӗ хальхи вӑрҫӑсене мирлӗ майпа йӗркелесе ярассишӗн тата тӗнчери мӗнпур тавлашуллӑ ыйтусене калаҫусем ирттернипе татса памалла тӑвассишӗн тӑнине ҫирӗплетсе панӑ.

Конференци Индо-Китай ыйтӑвӗ ҫинчен резолюци йышӑннӑ. Унта Вьетнам халӑхне хирӗҫ вӑрҫакан вӑрҫа чарса лартасси—Французсен пурнӑҫлӑ ыйту пулса тӑрать, тенӗ.

Германи ыйтӑвӗпе йышӑннӑ резолюцире ҫапла каланӑ: Франци нимӗҫ, уйӑрмӑн илсен, Франци халӑхӗ кӗрешнине Бонра тата Парижра сырса хӗтӗрленӗ договорсене, вӗсене ял ... ранпа пӗр ҫулталӑк хушши ытла иртрӗ пулсан та, ҫирӗплетмен.

Конференци французсене сыхлӑха вӑйлатма, ыран вӑрҫӑ кӑларма пултаракан вучахсене сӳнтерес тесе кӗрешӗве вӑйлатма чӗнет.

Конференци ҫавӑн пекех Франци халӑхне чӗнсе калание йышӑннӑ.

ПРАГА, июнӗн 25-мӗшӗ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Прагӑра миршӗн тӑракансен Чехословаки комитечӗ тӗнчери Сталинла премии лауреачӗсем И. Эренбург, Джеймс Эндикотт, Икуо Оияма ячӗпе савӑнӑҫлӑ кас организациленӗ. Касра Наци пухӑвӗн председателӗ О. Йон, министрсем, Наци фронтне кӗрекен мӗнпур организацисен представителӗсем пулнӑ.

СОВЕТ БАСКЕТБОЛИСЧӖСЕН АНТВЕРПЕНРИ ҪӖНТЕРӖВӖ

БРЮССЕЛЬ, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Совет баскетболисчӗсем июнӗн 27-мӗшӗнче Антверпенри командӑпа тӗл пулса выляврӗ. Вӑйӑ совет спортсменӗсем 102:60 шутпа ҫӗнтерипе вӗҫленнӗ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче Халӑх ҫарӗсем Йончхоньӑн хӗвеланӑҫ енчи районӗнче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Кунта тӑшманӑн икӗ полкӗ 30 танк пулӑшнипе атакӑсем тунӑ. Тӑшман атакисене пурне те сирсе пӑрахнӑ.

Ӗнер ҫӗрле Америка самолечӗсем Ненкван уездӗнчи ялсем ҫине тискеррӗн тапӑннӑ.

Зенитнӑй чаҫсем паян тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ, пӗр самолетне сиенленӗ.

ПХЕНЬЯН, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче халӑх ҫарӗсем Йончхоньӑн хӗвеланӑҫ енчи районӗнче, Хагамнен тата Пенамдонран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енчи районсенче тӑшмана хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Тӑшманӑн икӗ полкӗ 70 самолет тата темиҫе вуншар танксем пулӑшнипе хаяррӑн атакӑсем тунӑ. Тӑшман атакисене пурне те сирсе пӑрахнӑ.

Ӗнер ҫӗрле Америка самолечӗсем Кансэ уездӗнчи ялсем ҫине тискеррӗн бомбӑсем пӑрахнӑ.

Самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтаксем паян тӑшманӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ, 4 самолетне сиенленӗ.

Тыткӑнри ҫар ҫыннисене ҫаплах хӗсӗрлессӗ

ЛОНДОН, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Сеулти корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, паян тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсен командованийӗ ҫапла пӗлтернӗ: Пусан ҫывӑхӗнчи иккӗмӗш лагерьте вӗлерес патне ҫитиччен хӗнесе хӑварнӑ 5 салтака тупнӑ. Вӗсем Ҫурҫӗр Корейӑн тыткӑна лекнӗ салтакӗсем пулнӑ.

РОБЕРТСОН ЛИ СЫН МАНПА ИРТТЕРНӖ КАЛАҪУ ҪИНЧЕН СИНЬХУА АГЕНТСТВИ ПӖЛТЕРНИ

ПЕКИН, июнӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Цзян Нань Кэсонран ҫапла пӗлтерет:

Кларк хыҫҫӑн ӗнер Корейӑна президент Эйзенхауэр ятарласа янӑ представитель Уолтер Робертсон пырса ҫитнӗ. Вӑл Ли Сын Манпа канашланӑ.

Ҫакнашкал канашлусен тӗллевӗ мӗнле пулни пирки питех те асӑрханмалла. Хальхи вӑхӑтра Корейӑри перемири умне тухса тӑнӑ пысӑк хӑрушлӑха сирсе яма кирлӗ ӗҫсене тума Пӗрлешӳллӗ Штатсем хатӗр тӑни ҫинчен калакан нимӗнле паллӑ та ҫук. Пачах тепӗр майлӑ. Американецсем Ли Сын Мана малалла та хӗтӗртсе пыма тӑрӑшни ҫинчен калакан паллӑсем нумайланса пыраҫҫӗ. Ли Сын Ман Кларкпа каласнӑ хыҫҫӑн «кӗрешӗве малалла туса пырасси ҫинчен» тата хытӑрах кӑшкӑрма пуҫланӑ.

КОРЕЙӐРИ ТӖП ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИ ЛИ СЫН МАНӐН ПРОВОКАЦИЛЛЕ ӖҪӖСЕМ ҪИНЧЕН

ПХЕНЬЯН, июнӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Корейӑри тӗп телеграф агентствин корреспонденчӗ Паньмыньчжонран пӗлтернинче Ли Сын Манӑн провокацилле ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ.

Ырӑ шухӑшлӑ ҫынсем, тенӗ пӗлтерӳре, американецсем ирӗк панипе Ли Сын Ман ушкӑнӗ провокацилле ӗҫсем тунине пула Корейӑра перемири тӑвасси вӑраха кайнӑшӑн тата Корейӑри вӑрҫӑ тӑваттӑмӗш ҫула кӗснӑшӑн хытӑ тарӑхассӗ. Пурте пӗлессӗ, халӗ ӗнтӗ Корейӑра перемири ҫинчен пыракан калаҫусен кун-ҫулӗ маршал Ким Ир Сен тата генерал Пын Дэ-хуэй июнӗн 19-мӗшӗнче кӑларса тӑратнӑ ыйтусем пирки Кларк мӗнле ответ панинчен килет. Анчах та ҫак тарана ҫитсе те эпир Америка енчен нимӗнле ответ та илмен-ха.

„Корейӑри вӑрҫа чарса лартмалла!"

Лондонри митинг

ЛОНДОН, июнӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑра вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа виҫӗ ҫул ҫитнӗ май, июнӗн 25-мӗшӗнче каҫхине Кайд-паркра (Лондонӑн тӗп пайӗ) митинг пулса иртнӗ. Митинга Англири хӗрарӑмсен ассамблейи мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Англи комитечӗпе тата ҫар службинче пулнӑ миршӗн тӑракансен юхӑмӗпе пӗрле организациленӗ. Митинг «Корейӑри вӑрҫа чарса лартмалла!» текен лозунгпа иртнӗ.

Митинга тӗнчери Сталинла премии лауреачӗ Моника Фелтон, парламент членӗ пулнӑ лейборист Плэттс Миллс, мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Лондонри совет председателӗ Дж. Сэнди, Корейӑра ҫапӑҫакан Англи салтакӗсен амӑшӗсемпе арӑмӗсем, вӑрҫӑ ветеранӗсем тухса каланӑ.

Тухса калакансем Ли Сын Ман Корейӑра перемири тӑвассине чарса лартма хӑтланнине тата тыткӑнра пулнӑ ҫар ҫыннисене хӑйӗн ҫарне илме тӑрӑшнине сивлене. Хӑшпӗр ораторсем американецсене вӗсем Ли Сын Мана перемири ҫинчен ирттерекен калаҫусене кансӗрлеме хӗтӗртнӗшӗн айӑпланӑ.

Митингра пулнисем Корейӑра мир туса хурас тӗлӗшпе пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме пулнӑ.



Шупашкарти кирпӗч завочӗ ҫулсеренех ҫӗнӗ механизмсемпе пуянланать. Ыйвӑр ӗҫсене механизмсемпе тӑвассӗ. Кӑҫал кирпӗч тумалли ҫӗнӗ пресс лартнӑ, кирпӗч касмалли полуавтомат, тӑм турттармалли пӑравуспа мотовоз туяннӑ.
УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: мотовозпа карьертан тӑм турттарса килнӗ.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Шупашкарти ипподромра

Июнӗн 28-мӗшӗнче Шупашкарти ипподромра хӑвӑрт чупакан лашасен виҫҫӗмӗш ӑмӑртӑвӗ пулчӗ. Ӑмӑртӑва 34 лаша хутшӑнчӗ. Чупмалли дистанци—1.600 метр.

1951 ҫулта ҫуралнӑ лашасенчен Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозри «Береза» ятлӑ кӗсре чи лайӑх результат кӑтартрӗ. М. Токсубаев ездок тытса пынипе вӑл 1.600 метра 2 минут та 58 секундра чупса тухрӗ. Чӑвашсен государство лаша витинчи «Оплата» кӗсрен вӑхӑчӗ—3 минут та 3,5 секунд.

Государство лаша витинчи «Зыбь» кӗсрепе Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозри «Опасный» айӑра ӑмӑртса чуптарчӗҫ. Финиша чи малтан «Зыбь» кӗсре ҫитрӗ. Унӑн вӑхӑчӗ—3 минут та 7 секунд. «Опасный» айӑр унран 0,5 секунд кая юлчӗ.

1950 ҫулта ҫуралнӑ лашасенчен Ҫӗрпӳ районӗнчи «Новая жизнь» колхозри «Донец» айӑр пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ. Вӑл 1.600 метра 2 минут та 35 секундра чупса тухрӗ. Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхозри «Ойра», «Заслуга» кӗсресем, Ҫӗрпӳ районӗнчи «1905 год» колхозри «Перепел» ятлӑ айӑр ӑмӑртса чупнине ипподрома курма пынисем интересленсе пӑхрӗҫ. «Ойра» 1.600 метра 2 минут та 42 секундра чупса тухрӗ. «Перепел» ҫак дистанцие 2 минут та 49 секундра, «Заслуга» 2 минут та 55,6 секундра вӗҫлерӗҫ.

Шӑмӑршӑ районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозри «Жребий» айӑра чи лайӑх вӑхӑт кӑтартассишӗн чуптарчӗҫ. Вӑл 1.600 метра 2 минут та 21 секундра чупса тухрӗ, иртнӗ ӑмӑртури результата 4,1 секунд чухлӗ лайӑхлатрӗ.

А. ЖИРНОВ.

Велосипедистсен ӑмӑртӑвӗ

Июнӗн 28-мӗшӗнче Шупашкарти велосипедистсен хулара мала тухмалли ӑмӑртӑвӗ вӗҫленчӗ. Икӗ кун хушши ӑмӑртнӑ хыҫҫӑн командӑсем енӗпе илсен «Спартак» спорт обществи велосипедисчӗсем пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗҫ. Иккӗмӗш вырӑна «Динамо» спорт обществи команди тухрӗ.

Арҫынсенчен 25 километра спартаковец Буряков, хӗрарӑмсенчен (15 километра) «Динамо» спорт обществи членӗ Ильина чи малтан тухрӗҫ.

Виҫӗмкун велосипедистсен кросӗ пулчӗ. Хӗрарӑмсем хушшинче (10 километр чупас енӗпе) «Динамо» спорт обществи членӗ Ильина пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ. «Спартак» спорт обществи членӗ Полякова иккӗмӗш вырӑна тухрӗ. Арҫынсем 20 километр ӑмӑртса чупрӗҫ. Финиша чи малтан «Спартак» спорт обществи членӗ Павлов килсе ҫитрӗ. Иккӗмӗш вырӑна Буряков («Спартак» спорт обществинчен), виҫҫӗмӗш вырӑна динамовец Дубровин тухрӗ.

ФУТБОЛ

Республикӑра мала тухассишӗн

Иртнӗ вырсарникун Шупашкарти «Энергия» («Молния») спорт обществи стадионӗнче футбол вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн икӗ вӑйӑ пулчӗ. Стадион хуҫисем Чапаевски поселок командипе тӗл пулса выляреҫ. Чапаевски поселок команди 5:1 шутпа ҫӗнтерчӗ.

Шупашкарти «Спартак» тата Улатӑрти «Торпеда» («Трактор») спорт обществисен футбол командисем хушшинчи вӑйӑ 2:2 шутпа пӗтрӗ.

Ҫӗмӗрлере вырӑнти «Урожай» спорт обществи физкультурникӗсем Шупашкарти «Динамо» спорт обществин футбол командипе тӗл пулса выляна. Вӑйӑра «Урожай» команди 1:0 шутпа ҫӗнтернӗ. «Новая жизнь» колхозри футболистсем Ҫӗрпӳре Улатӑрти «Локомотив» спорт обществи футболисчӗсемпе тӗл пулнӑ. Вӑйӑ 2:1 шутпа, улатӑрсем ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Шкул ачисен ӑмӑртӑвӗ

Июнӗн 24-мӗшӗпе 26-мӗшӗсенче Шупашкарти «Молния» спорт обществин стадионӗнче хулари шкул ачисен ҫуллахи ӑмӑртӑвӗ пулчӗ. Унта шкул ачисем ҫӑмӑл атлетика тата баскетбол енӗпе, шыв станцийӗнче шывра ишес енӗпе ӑмӑртрӗҫ. Ӑмӑртӑва хулари 9 шкул хутшӑнчӗ.

Пӗтӗмӗшпе илсен, ӑмӑртура арҫын ачасен шкулӗсем хушшинче 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкул коллективӗ, хӗрачасен шкулӗсем хушшинче 3-мӗш номерлӗ шкул коллективӗ пӗрремӗш вырӑнсене йышӑнма тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Ӑмӑртура мала тухнӑ командӑсене кубка ҫӳрекен призсемпе дипломсем, уйрӑм спортсменсене хаклӑ парнесем тата дипломсем пачӗҫ.

Н. ХОРЬКОВ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАҪАТРА

Умстатья—Ҫамрӑк коммунистсене воспитани парасси.

СССР Финанс министерстви СССР халӑх хуҫалӑхне аталантармалли государственнӑй заема (1953 ҫулхи кӑларӑм) ҫӗршывра сарни ҫинчен пӗлтерни.

Тырпул пухса кӗртме хатӗрленни ҫинчен районсенчен килнӗ информаци.

М. Кузьмин.—Парти райкомӗн членӗсен рольне ӳстерсе пымалла.

С. Сдобнов.—Колхозла социализмла харпӑрлӑх—колхозсен обществӑлла хуҫалӑхӗн никӗсӗ.

Сад ӳстерес тӗлӗшпе ытларах ӗҫлемелле (сад ӳстерес ыйтупа пухӑннӑ республикӑри канашлуран).

Вырӑнти тата урӑх ҫӗршывсенчен килнӗ информаци.

Редактор заместителӗ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ—Кизел хулинчи драма театрӗн гастролӗсем. Июнӗн 30-мӗшӗнче — «Двенадцатая ночь».

Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуҫланать.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн организованнӑй йӗркепе рабочисем пухакан пайӗ Молотов, Вологда облаҫӗсенчи тата «Чувашлес» трестри вӑрманпромхозсенче вӑрман хатӗрлемелли сезонта ӗҫлеме кайма договорсем тӑвать. Сезонта ӗҫлемелли договорсене ултӑ уйӑхлӑха — кӑҫалхи октябрӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа ҫитес ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗччен срока тӑвассӗ.

Вӑрман хатӗрлемелли сезонта урӑх облаҫре ӗҫлеме кайма договор тунӑ ҫынна каялла илмелле мар пособи 200 тенкӗ, хамӑр республикӑри вӑрманпромхозра ӗҫлеме кайма договор тунӑ ҫынна—100 тенкӗ параҫҫӗ.

Кунсӑр пуҫне, вӑрман хатӗрлекен предприятире ӗҫлеме урӑх облаҫрен пынӑ рабочисене администраци 300 тенкӗ, хамӑр республикӑран килнӗ рабочисене 200 тенкӗ аванс пама пултарать, ҫав аванса виҫӗ уйӑх хушшинче тӳлесе татмалла.

Ӗҫлеме кайма договор тунӑ ҫынсене ҫул укҫи тӳлеттермесӗр илсе каяҫҫӗ тата ҫул ҫинче пулнӑ вӑхӑтра кашни талӑкра 10 тенкӗ параҫҫӗ, ҫавӑн пекех договор срокӗ тухсан каялла килнӗ чухне те ҫул укҫи хӑйсене тӳлеттермеҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрленӗ чухне нормӑна 100 процент тата ытларах тултарнӑ рабочие договор срокӗ тухсан уйӑхри ӗҫ укҫин 50 процентчӗ чухлӗ премии параҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрленӗ тата сулӑ юхтарнӑ ҫӗрте ӗҫлесе сезонти ӗҫ нормине тултарса пынӑ колхозниксен хуҫалӑхӗсене сӗт тата ашкакай государствӑна памалли нормӑна 25 процент чакараҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлемелли сезонта ӗҫлеме кайма договор тӑвасси ҫинчен ӗҫҫынни депутачӗсен ялти тата районти Совечӗсен исполкомӗсенче ыйтса пӗлмелле.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн организованнӑй йӗркепе рабочисем пухакан пайӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫӗ пайӗ—3-04, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ-01436 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.